Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЮЛЬ 10 ВЫРСАРНИКУН 157 (4970) №.

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ.* Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйĕн 6—23

Парти ÿсĕмĕ çинчен

Пирĕн партин, Ленин—Сталин партийĕн вăйĕ, çĕнтерĕвĕ—вăл массăпа таччăн çыхăнса тăнинче. Парти хăйĕн речĕсене йута, пăсăлса кайнă, тăшманла элементсенчен тасатса, рабочи класпа хресченсем, совет интеллигенцийĕ хушшинчи чи лайăх вăйсене илсе ÿсет. Партине пирĕн социализмлă тăван çĕршыври патриотсем, социализм строительствин тĕрлĕ участкисенче кĕрешсе пиçĕхнĕ, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешме пултарнине кăтартнă çынсем кĕреççĕ.

Йулашки çулсенче пирĕн парти тавра партире тăманнисен нумай йышлă активĕ ÿссе çитĕнчĕ. Иртнĕ суйлавсенче—ССРС Верховнăй Совечĕн суйлавĕнче, унтан—союзлă республикăсемпе автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсенче çĕршер, пиншер партире тăман активиссем коммунистсемпе пĕрле округсенчи, участкăсенчи суйлав комиссийĕн членĕсем, доверенăйĕсем, агитаторсем пулса ĕçлерĕç, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешме пултарнине кăтартрĕç. Социализмлă промышленнăçра, транспортра, йалхуçалăхĕнче стахановецсен йышлă çарĕ ÿсрĕ. Вĕсен пĕтĕм шухăшĕ, ĕмĕчĕ партипе пĕрле. Çавăнпа та пирĕн çĕршыври рабочи клас, хресченсем, ĕç интеллигенци хушшинчи чи лайăх çынсем парти ретĕнче тăрса Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне пама хатĕр.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ партине илессине çĕнĕрен пуçарса йамала тунăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Чăваш парторганизацийĕнче унтанпа парти членне 326 çын, парти кандидатне 467 çын илнĕ. Вăл хисепрен 1938 çулта парти членне 215 çын, парти кандидатне 381 çын илнĕ.

1938 çулта, уйрăмах парти Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ хыççăн, партине илес ĕç чылай лайăхланчĕ. Ку тĕлĕшпе çак факта асăнни те çителĕклĕ пулать: 1936 çулти ноябĕртен пуçласа 1937 çулти декабĕре çитиччен партине 197 çын çеç илнĕ пулсан, 1938 çулăн малтанхи 4 уйăхĕ хушшинче 349 çын илнĕ, урăхла каласан кăçалхи 4 уйăх хушшинче иртнĕ вăхăтри 14 уйăх хушшинче илниччен 2 хута йахăн ытларах илнĕ.

Анчах, калас пулать, йулашки вăхăтри ÿсĕмсене çителĕклĕ теме çук. Чылай парторганизацисенче партине илес ĕç начар тăрать,—партине çĕнĕ членсем илесси çине тивĕçлипе пăхмаççĕ. Сахал мар Райкомсемпе пуçламăш парторганизацисенче партине кĕме панă зайавленисене уйăхĕ-уйăхĕпе выртараççĕ, партине илнисене парти документĕсене вăхăтра йĕркелесе памаççĕ. Çав вăхăтрах тата республикăри 387 пуçламăш парторганизацирен 87 организацинче пайанхи куна çитсе те партине çĕнĕрен илес ĕçе тытăнман. Вăл хисепрен 20-шĕ—Шупашкар хула организацине тивет.

Партине илесси питĕ ответлă, политикăлă пысăк ĕç. Партине илесси вăл заданисем парса тумали ĕç мар, çавăн пекех вăл кампанилĕ ĕç те мар. Вăл тĕплĕн, тарăннăн шухăшласа тумали ĕç. Партине илес ĕçре большевикла сыхлăх ниxçанхинчен те вăйлă пулмалла. Партине илес ĕçе организацилес пулать.

Паллах, ăçта партилĕ-массăлă ĕç çук, партире тăман актив хушшинче, сочувствуйушчисемпе комсомол хушшинче ĕçлемеççĕ, унта парти ÿсĕмĕ те пулма пултараймасть. Анчах çак чăнлăха хăшпĕр организацисемпе вĕсен руководителĕсем ăнланасшăн мар, вĕсем рабочисемпе колхозниксен политикăлă тата производствăлă активлăхĕ ÿснинчен хăйсене вальли политикăлă вывăд тума пĕлмеççĕ.

Çак кунсенче „Чăваш Коммунĕ" редакци çумĕнче Шупашкар хулинчи пуçламăш парторганизаци руководителĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Хăшпĕр пуçламăш парторганизаци руководителĕсем, сăмахран, Данилăв йулташ (Макарон хапрăкĕ), парторганизацире нимĕнле ÿсĕм те çукки рабочисен политикăлă пĕлĕвĕ айалта тăнăран пулнă пек ăнлантарса пама пăхать. Кун пек шутлани вăл тĕрĕс мар. Сăлтавĕ кунта рабочисен политикăлă пĕлĕвĕ вăйсăрринче мар, парторганизаци политикăлă-массăлă ĕçĕ вăйсăрринче.

Хăшпĕр йулташсем тата, хăйсем нимĕн те туманнине хÿтлеме тепĕр майлă сăлтав туртса кăларнă. Климентăв йулташ (Шупашкарти типографи) парти ÿсĕмĕ çинчен сăмах тапратакансене „штурмовщинă" тăватăр, тесе айăплама пăхать. Калама çук лайăх „сăлтав"! Анчах Климентăв йулташ çак чăнлăха манать. Парти Тĕпкомĕ партине çĕнĕрен илме ирĕк панăранпа çак кĕркунне 2 çул тултарать. Типографи парторганизаци питĕ йерипен çавăрăнкалать-ха. Чăнах та, 2 çынна парти кандидатне илнĕ ĕнтĕ, анчах çакăнпа лăпланса лармалла, мăнкăмăлланма парторганизацин йурамасть. Сочувствуйушчисен йышĕпе те мухтанма пултараймасть ку парторганизаци—2 çын анчах. Комсомол йышне те çителĕклĕ теме çук—15 çын. Кунта рабочисен йышĕ сахал мар—300 çын патне çитет. Стахановецсен йышĕ нумайланса пырать. Ĕçсем çакăн пек тăнă вăхăтра мĕнле „штурмовщинă" çинчен сăмах пулма пултарать?

Партире тăман актив хушшинче, сочувствуйушчисем, комсомол хушшинче ĕçлессине вăйлатмала. Пайанхи куна партире тăман актив хушшинче ĕçлесси питех те начар тăрать-ха. Илĕпĕр сочувствуйушчисемпе ĕçлессинех. Чылай парторганизацинче сочувствуйушчисем çинчен манса кайнă, сочувствуйушчисене çухатса пĕтернĕ. Йăманкас парторганизацинче (Канаш) сочувствуйушчисем 13 çын пулнă, халĕ 8 йулнă. Ыттисем ăçта кайса кĕнĕ—ун çинчен парторг заместителĕ Дмитриĕв йулташ шухăшласа пăхма вăхăт тупайман-ха. Кунта сочувствуйушчисене парти ĕçне хутшăнтармаççĕ, нимĕнле порученисем памаççĕ. Партин уçă пухăвĕсем пулмаççĕ. Çапла вара сочувствуйушчисем парти пухăвĕсенче те пулаймаççĕ, вĕсене уйрăммăн та пухса калаçмаççĕ.

Пуçламăш парторганизацисем комсомол организацине йĕртсе пырассинчен ытларах партприкрепльоннăйсене улăштараççĕ. Çавăн пек Шупашкар хула совет организацинче партприкрепльоннăйсенчен пĕри те комсомол организацин ĕçĕсем мĕншĕн начар пынине тавçăрса илеймен. Хăшпĕр пуçламăш парторганизаци руководителĕсем: пире комсомол организаци начар пулăшать, партине кĕрес текен комсомолецсене рекомендаци памасăр тытса тăрать тесçĕ (Спиртсавăт). Комсомолра ĕçсем начар тăни—парторганизаци комсомола начар йĕртсе пынинчен килет. Çавăнпа та комсомола йĕртсе пырассине хыттăнах вăйлатмала.

Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешме пултаракан, ĕçре тĕрĕсленнĕ йулташсене парти ретне кĕме пулăшмала. Анчах партине илнĕ чухне парти Тĕпкомĕ: „Партин кашни организацин задачĕ—большевикла сыхлăха пур майсемпе те ÿстерсе пырса ленинла парти йалавне çÿле тытасси, парти ретне йут, тăшманла тата ăнсăртран элементсем нийепле те кĕрсе каймала мар тăвасси пулать" тенине пĕр самант лăха та манмала мар. „Партине çĕнĕ членсем кашнине уйрăм илес йĕркене çирĕп пăхăнса, партине хамăр çĕршыври чи лайăх, чăн-чăнах малта пыракан, пĕтĕм хăватпа рабочи класшăн тăракан çынсене, чи малтан рабочисенчен, çавăн пекех тата социализмшăн пыракан кĕрешÿвĕн тĕрлĕ участкисенче тĕрĕсленнĕ хресченсенчен тата ĕç интеллигенцийĕнчен суйласа илмеле" тăвас пулать.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1938 çулхи мартăн 4-мĕшĕнче парторганизацисен партине илес ĕçĕсем çинчен йышăннă решенине, çавăн пекех ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ партине илес ыйтусем тăрăх йышăннă решенисене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешесси — кашни парторганизаци умĕнче тăракан вирлĕ задач пулать. Парти райкомĕсемпе Шупашкар хула комитечĕн уйрăмах партине илес ĕçсем начар тăракан пуçламăш парторганизацисене куллен кун практикăлă пулăшу парса, çак ĕçе лайăхлатса йарасси çине хытăрах çавăрса пăхмала.

Лайăх çынсене тĕплĕн тĕрĕслесе партине илнипе пĕрлех, çемрăк коммунистсене большевизма вĕрентсе пымала, вĕсенчен коммунизмшăн кĕрешекен чăн-чăн паттăрсем хатĕрлемеле.

Кашни гражданин—Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне çырăнса илĕр!

Ĕççыннисене пурне те займ илме çырăнтарасси—партин тата советсен кашни организацин хисеплĕ ĕçĕ

Малта пыракансен опычĕсемпе уса курас пулать

ÇĔРПУ. (Хамăр корр.) Займ сарас ĕçре районри йалсоветсенчен чи лайăх ĕçлекенни—Уйкас йалсовечĕ. Кунта йалсовет председателĕ Гурйĕв, секретарĕ Никитин йулташсем халăха çĕнĕ займ çинчен лайăх ăнлантарса параççĕ, колхозниксем ĕçленĕ çĕре кайса калаçусем туса ирттереççĕ. Правительства çĕнĕ займ кăларнине илтсенех Гурйĕвпа Никитин йулташсем тăрăшса ĕçленипе Уйкас йалсоветĕнче 6 пин тенкĕлĕх займ çыранчĕç. Халĕ ку йалсоветри колхозниксем çĕнĕ займшăн укса тÿлеме тытăнчĕç.

„Красный бригадир" колхозра займ уполномоченнăйĕ Ферапонтăв йулташ иртнĕ çулта та займ сарас тата займ укçине пухас ĕçре вирлĕн ĕçленĕ. Вăл тăрăшса ĕçленипе колхозниксем займ укçине малтан тÿлесе татнă. Çак паха ĕçшĕн ăна райĕçтăвком 200 тенкĕ укçа парса премиленĕ. Ферапонтăв йулташ халĕ те ĕçе хастарлăн тытăннă. Вăл кашни кунах колхозниксене çĕнĕ займ çинчен ăнлантарать. Колхозниксем 2.030 тенкĕлĕх займ çырăнчĕç.

Çакăн пекех Паваркасси йалсоветĕнче (председателĕ Савелйĕв йулташ) 4130 тенкĕлĕх, Аслă Тукаль йалĕнче икĕ кун хушшинче 2.330 тенкĕлĕх займ çырăннă.

Анчах ĕç пур çĕрте те пĕр пек пымасть-ха. Туçи йалсоветĕнче (председателĕ Пушкин йулташ), Чăрăш йалсоветĕнче (председателĕ Иванов йулташ) çак тарана çитсе те йал халăхне пухса займ çинчен ăнлантарса паман. Кунта колхозниксемпе йединоличниксем чылайĕшĕ çĕнĕ займ кăларнине пĕлмеççĕ. Чăрăш йалсоветĕнчи вулавçурт пуçлăхĕ Васильĕв йулташ:

— Займ çинчен мансăрах ăнлантарса паракансем тупăнĕç-ха,—тесе ларать.

Иванăвă йалсоветĕнче (председателĕ Кузнецов йулташ) 5 йал. Çак 5 йалта пайанхи куна çитсе те 300 тенкĕлĕх çеç займ çырăннă. Хĕрарăмсемпе йединоличниксем хушшинче халĕ те займ çинчен ăнлантарман.

Районри перекет кассинче ĕçлекенсем вырăнсенче займ çырăнас ĕç мĕнле пынине пĕлмеççĕ, йалсене сахал тухса çÿреççĕ, ĕç начар пыракан вырăнсене тухсан та çителĕклĕ пулăшу памаççĕ. Лайăх ĕçлекен йалсоветсен опычĕсемпе уса курмаççĕ.

В. Васильĕв.

Укçа пухас ĕç вăйлăланать

ЙЕТĔРНЕ. Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займа çырăнас тата займшăн укçа пухас ĕç вăйлăлансах пырать. Чылай колхозсенчи колхозниксем займ илме çырăннă чухнех укçине тÿлесе татаççĕ.

Пĕрçырланти Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем 800 тенкĕлĕх займ çырăнса, ийулĕн 8-мĕшне 450 тенкĕ тÿлерĕç. Хучаш колхоз колхозникĕсем çĕнĕ займа 10.200 тенкĕлĕх çырăннă. Кунта Каçианăвпа Йакăвлĕв колхозниксем 50-шер тенкĕлĕх займ çырăнса укçине çав вăхăтрах тÿлесе татнă. Халĕ вĕсене кура ытти колхозниксем те займшăн укçа тÿлеççĕ.

Н. Цветков.

Иртнĕ çулхинчен иртерсе çырăнчĕç

СĔНТĔРВĂРРИ. Çĕнĕ займа районри чылай йалсовечĕсем иртнĕ çул çырăннинчен иртерсе çыранаççĕ. Ака, Камайĕвă йалсоветĕнче иртнĕ çулта 4.040 тенкĕлĕх займ çырăннă пулсан, кăçал 6.580 тенкĕлĕх, Аксаринă йалсоветĕнче иртнĕ çул 2.445 тенкĕлĕх çырăннă пулсан, кăçал 3.050 тенкĕлĕх çырăннă.

Ку йалсовечĕсенче чылай колхозниксемпе йединоличниксем çĕнĕ займ укçине тÿлесе татнă. Займ укçи пухас ĕç вăйлăлансах пырать.

Çурри йахăн пухнă та

ЙЕЛЧĔК. (Телефон тăрăх). Аслă-Пăла Тимеш йалсоветĕнчи ĕççыннисем займа пысăк хаваслăхпа çырăнса илнĕ. Ийулĕн 8-мĕшĕнче йалсовечĕпе 5.130 тенкĕлĕх займ сарса укçине 2.410 тенкĕ пухса Государствă банкне хывнă. Çак ĕçре уйрăмах Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Куçмин тата Портнов йулташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Д. ИВАНОВ.

★ ◆ ★

Грузин ССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççийĕ уçăлнă

Ийулĕн 8-мĕшĕнче Тбилиси хулинче Грузин ССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççийĕ ĕçе тытăннă.

Çеççийе чи ватă депутат—ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиум Председателĕн заместителĕ Грузин СС Республикин Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ Ф. Й. Махарадзе уçнă.

Депутатсен групписен представителĕсем сĕннĕ тăрăх çеçси пурте пĕр саслăн Грузин ССР Верховнăй Совет председательне Грузири К(б) Партин Тĕп Комитечĕн иккĕмĕш секретарне И. Д. Кочламазашвилине суйланă, председателĕн заместителĕсене пурте пĕр саслăн Окумскри Ленин йачĕпе тăракан (Абхази АССР) миллионер-колхоз председательне Г. Г. Джгубурийана тата аджарка-врача Н. Р. Шашикашвилине (Аджари АССР) суйланă.

Унтан çеççин кун йĕркипе регламентне çирĕплетнĕ. Грузин ССР Верховнăй Совет депутачĕсен полномочине тĕрĕслеме мандат комиççи суйланă.

Çеççи калама çук пысăк çĕкленÿпе, хаваслăн алă çупса Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

(ТАСС).

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Чăваш орфографинчи улшăнусем çинчен йышăннă постановлени

Чăваш правописанин 1933 çулта йышăннă правилисенче вырăс чĕлхинчен тата ун урлă урăх чĕлхесенчен кĕнĕ интернационаллă сăмахсене тата ытти тĕрлĕ сăмахпулăвĕсен формисене çырас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пулнă. 1933 çулта вырăс алфавитĕнчен уйрăм саспаллисене кĕртмин орфографи ыйтăвне татса памарĕ, мĕншĕн тесен пĕр сăмахах икĕ тĕрлĕ графикăпа çырасси çапланах йулчĕ (Вологда—Вологдă, Горький—Горйкий, пятилетка—пйатилеткă).

Чăваш чĕлхинче вырăс тата интернационаллă сăмахсене пăсса çырнипе буржуаллă националиссем чăваш чĕлхине, апла пулсан чăваш культурине те, вырăс халăхĕн малта пыракан социализмлă культуринчен уйăрас тĕлĕшпе усă курнă.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Чăваш чĕлхинче вырăс тата интернационаллă сăмахсене çырма чăваш алфавитне вырăс алфавитĕнчен çакă ултă саспаллине: ъ, щ, ь, э, ю, я кĕртес.

2. Чăваш алфавичĕн йĕркине çапла çирĕплетес: а, ă, б, в, г, д, е, ĕ, ж, з, и, й, к, л, љ, м, н, њ, о, п, р, с, ç, т, ť, у, ÿ, ф, х, ц, ч, ш, щ, ъ, ы, ь, э, ю, я—пĕтĕмпе 39 саспалли.

3 Çутĕç Халăх Комиссариатне, Чăвашгиза тата пĕтĕм хаçатсен редакцийĕсене çак улшăнусене чăваш орфографине çак постановленин пичетленсе тухнă кунран пуçласа кĕртме хушас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн председателĕ
З. Андрейĕвă.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ
Л. Спасăв.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн секретарĕ
Т. Васильĕв.

Вырăс чĕлхи—совет халăхĕсен пуйанлăхĕ

Союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйланă чухне коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ тунă чаплă çĕнтерÿ ленинла—сталинла наци политики çĕнтернине пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕ. Халăхсене социаллă тата нацилĕ пусмăртан пĕтĕмпех ирĕке кăларнин усăмлăрах картинине аслă Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕсĕр пуçне урăх курма çук. Мĕн пур республикăсенче содержанипе социализмлă, формипе нацилĕ культурă йепле чечекленсе кайрĕ! Пур çĕрте те халăх хăйĕн чĕлхипе талкишпех хутла пĕлесси патне çывхарса пырать. Пур çĕрте те хăйсен, формипе нацилĕ, социализмлă литературă ÿсрĕ, тарăнăшĕпе тата илемлĕхĕпе тĕнчене тĕлĕнтерекен хăйсен нацилĕ искусстви ÿсрĕ.

Тата çав вăхăтрах союзлă тата автономлă республикăсенчи халăх массисем вырăс чĕлхи патне хальхин пек вăйлăн туртăнни ниxçан та пулман. Çавăн пек туртăм вăйлансах пырать. Вырăс чĕлхине пĕлни ĕлĕкрех нацилĕ буржуазин сахал сийĕн привилегийĕ шутланнă Пуçпулса тăракан класăн речĕсене кĕрес тесе тата халăха, рабочисемпе хресченсене тытса тăракан хăйсен влаçне çирĕплетес тесе, ĕлĕкхи „окраинăсенче" помещиксен, капиталиссен, пупсен ывăлĕсем вырăс чĕлхине вĕреннĕ.

ССР Союзĕнче пурăнакан мĕн пур тĕрлĕрен националь ăçсен рабочийĕсемпе хресченĕсем хальхи вăхăтра вырăс чĕлхипе калама çук пысăккăн интересленни пачах урăх сăлтавсенчен килет. Вĕсем хăйсен тăван чĕлхине вырăсăнне хирĕç кăларса тăратмаççĕ. Вĕсем хăйсен чĕлхине пĕлеççĕ те йуратаççĕ, унпа вĕренеççĕ, ăна вăйлатса пыраççĕ. Анчах вĕсем çав вăхăтрах вырăс чĕлхине те, тĕнчери чи пуйан социализмлă культурă тунă, социализмлă культурăн чи пысăк çитĕнĕвне—ленинизма тунă аслă вырăс халăхĕн чĕлхине те пĕлесшĕн. Вĕсем вырăс чĕлхипе советăн пĕрлехи пуйанлăхĕ пек усă кураççĕ.

„Правда Востока" хаçат пĕлтерет: „Намангапра пурăнакансем вырăс чĕлхине вĕренессипе пысăккăн интересленеççĕ. Хулари шкулсем çумĕнче çитĕннисене вальли курссем организациленĕ. 3-меш №-лĕ туллимар вăтам шкул çумĕнче вырăс чĕлхипе вĕренме икĕ группă тунă, вĕсенче Майан Пĕрремĕш йачĕпе, Сталин йачĕпе, Калинин йачĕпе тăракан т. ыт. махальсенче пурăнакансем вĕренеççĕ. 19-мĕшпе 25-мĕш №-лĕ шкулсем çумĕнче те çавăн пек группăсем вĕренеççĕ".

Вырăс чĕлхине вĕренме çавăн пек туртăнни питех те ăнланмала ĕнтĕ. Пирĕн пĕтĕм çĕршыва капиталиссенчен, помещиксенчен, кулаксенчен хăтарассишĕн кĕрешнĕ çĕрте Российри рабочи клас мĕнле историлĕ вырăн йышăннине пирĕн çĕршыври ĕççыннисем пĕлеççĕ. Нацилĕ пусмăрлăхпа нацилĕ тансăрлăха пĕтерес тĕлĕшпе вырăс халăхĕ тунă гигантла пысăк ĕçе пирĕн тăван çĕршыври халăхсем пурте чунтанах хисеплеççĕ. Вырăс чĕлхине аслă халăх пусмăрçăсене хирĕç нумай ĕмĕрсем хушши кĕрешсе туптаса тунă. Вырăс халăхĕ хушшинчен аслă борецсемпе мыслителсем, аслă писателсемпе ученăйсем тухнă.

Совет Союзĕнчи халăхсем ĕлĕк наци ирĕклĕхĕшĕн кĕрешни вырăссен революцилĕ демократин пĕтĕм историйĕпе пĕр уйăрăлми çыхăнса тăрать. Белинский, Добролюбăв, Герцен, Чернышевский произведенийĕсемпе украинсен аслă поэт-революционерĕ Шевченко вĕренсе воспитани илнĕ, вырăссен демократилĕ литератури—грузин литератăрĕ Чавчавадзе произведенийĕсен çăлкуçĕ пулнă.

Çак çыхăну нуншар çулсем витĕр пырать. Вăл татти-сыпăнсăр тĕреклĕнет. Ленинпа Сталин произведенийĕсен оригиналĕ пулнă май, вырăс чĕлхи çине Совет Союзĕнчи халăхсен малта пыракан çыннисем çеç мар, тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен малта пыракан çыннисем те пăхаççĕ ĕнтĕ.

Вырăс чĕлхине вĕренме кирлине йышăнса, Маркспа Енгĕлс малтанах теннĕс курса хунă. 1875 çулта Енгĕлс çапла çырнă: „Вырăс чĕлхине пĕлни,—вăл чĕлхене хăйĕнех пур йенчен те вĕренме тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен вăл чи вăйлă тата чи пуйан чĕрĕ чĕлхесенчен пĕри, тата ăна вăл уçса паракан литературăшăн та вĕренме тивĕçлĕ,—халь ĕнтĕ сайра-хутра пулакан ĕç мар...". (Соч. XV, 258).

Латынь—вăтам ĕмĕрти общĕствăри пуйаннисен сийĕн пĕтĕм тĕнче чĕлхи пулнă пекех, француз чĕлхи—вунсаккăрмĕшпе вунтăххăрмĕш ĕмĕрсенче пĕтĕм тĕнче чĕлхи пулнă пекех, вырăс чĕлхи социализмлă культурăн пĕтĕм тĕнчери чĕлхи пулса пырать. Хăйĕн „Испани дневникĕ" çинче Михаил Кольцов Мадридри хаçатсем сутакан, рабочи çемйинче çуралнă ача пушă минутсенче çавăнсах вырăс чĕлхине вĕренни çинчен каласа парать. Вырăс чĕлхине Китай халăхĕн паттăр бойецĕсем вĕренеççĕ.

Совет халăхĕн тăшманĕсем, фашисăмăн буржуаллă-националисла агенчĕсем нацилĕ республикăсенче вырăс чĕлхине вĕренме пур тĕрлĕ мелсемпе те чăрмантарса пынă. Буржуаллă-националиссем троцкисла-бухаринла сутăнчăксемпе, шпионсемпе пĕр пулса, Совет Союзне пĕр-пĕринчен уйăрăлса тăракан, пĕр-пĕрне йут клеткăсен группи туса хума, çапла майпа вĕсен хушшинчи çыхăнăва пĕтерме, вĕсене вăйсăрлатма, вĕсене çаратмашкăн йутçĕршывсенчи империалиссен аллине пама тăрăшнă.

Халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкнă, тата уйраман илсен, вĕсен çутĕç комиссариачĕсенче тата халăха çутта кăларас ĕç пайĕсенче пулнă шпионла йăвисене тĕпă шыв çине кăларса пĕтерсе хунă. Халăхсем çуталăх патне, социализмлă культурă патне, вырăс чĕлхине вĕренесси патне туртăннине халь пур тĕрлĕ чăрмавсенчен те ирĕклетнĕ. Союзлă тата автономлă республикăсен правительствисем çĕнĕ вĕренÿ çулĕнчен пуçласа нацилĕ шкулсенче вырăс чĕлхине обйазательнăй йĕркепех вĕрентмеле тунă.

Ку вăл—çăмăл задачă мар. Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ валли преподавательсем, учебниксем хатĕрлесе хурас пулать. Çак пит пысăк та паха задачăна пурнăçа кĕртессишĕн чăнчăн большевикла хĕрÿлĕн ĕçлесен, чĕрепе çĕкленсе тата тÿрĕ кăмăлпа ĕçлесен вĕсене хатĕрлесе хума пулать.

Анчах ку ĕç пур çĕрте те ун пек пулса пымаст. Нумай вырăнсенче хатĕрленÿ ĕçĕ вăрăма тăсăлса пырать. Вăл имшерĕн, чиновниклĕ хавăртлăхсемпе сарăлса пырат. Башкирире, сăмахран, çутĕç халăх комиссарĕ Алибайĕв йулташ учебниксем хатĕрлес тĕлĕшпе пĕтĕм ĕçе иккĕмĕш вырăнта тăракан работниксене шанса панă, вырăс чĕлхине 4-мĕш класра вĕрентме йышăнса çирĕплетнĕ учебникре темĕн чухлĕ пысăк йăнăшсем пур.

Тутар АССР-че учебниксем хатĕрлес ĕçе пит кайа йулса, „май уйăхĕнче кăна тытăннă, хăшпĕр учебниксене çырма автăрсем те çук-ха. Тутар шкулĕсем валли хрестомати çырмали программăна РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче çирĕплетмешкĕн ийунĕн 2?-мĕшĕнче тин йарса панă. Ку програмă тăрăх хрестомати хăçан пулса çитĕ-ши?

Çакнăшкал хыпарсем ытти республикăсенчен те килеççĕ. Ку ĕнтĕ çакна кăтартса парать: халăха çутта кăларас ĕç органĕсенче пулнă сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пур çĕрте те вĕсне çитийех пĕтермен-ха, государствăлă пит пысăк ĕç çине киревсĕр канăçлăхпа пăхасси пур-ха, буржуаллă-националисла сылăша вĕçне çитийех хуса кăларман-ха.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланиччен вăхăт пит нумайах йулмарĕ ĕнтĕ,—анчах ĕçе пĕтĕм вăйпа, большевикла тимлĕхпе çине тăрса тытăнса шкулсем валли вырăс чĕлхине вĕрентме лайăх учительсем, лайăх учебниксем çителĕклĕ хатĕрлемешкĕн вăл вăхăт çителĕклĕ.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем вырăс чĕлхине, унăн пĕтĕм пуйанлăхне пĕлесшĕн. Социализмлă культурăн хăватлă хĕçпăшалĕ пулса тăракан вырăс чĕлхи кашни совет гражданинĕн пуйанлăхĕ пулса тăма тивĕç!

(„Правда" умстатйи, ийулĕн 7-мĕш.).

Тырпулсене уйран кӗске вӑхӑтра, пӗртте тӑккаламасӑр пухса кӗме хатӗр пулар! Ҫак пысӑк задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртме кашни колхозӑн, кашни бригадӑн ӗҫ планӗ пултӑр!

Пӗтӗм ӗҫе план тӑрӑх тӑваҫҫӗ

ЙАНТУШРИ (Ҫӗрпӳ р.). „Ҫамрӑк вӑй“ колхоз тырпулсене пухса кӗме рабочи план туса хатӗрленӗ. Ҫав плана колхозниксемпе колхозницӑсен пӗрлехи пухӑвӗнче тӗплӗн сӳтсе-йавса ҫирӗплетнӗ. Ҫавнашкал плансем кашни бригадӑрах пур. Кӑҫалхи план иртнӗ ҫулхи планпа танлаштарсан, пысӑк уйрӑмлӑхпа палӑрса тӑрат̌. Кӑҫалхи план ҫинче каман ӑҫта тата мӗнле ӗҫре ӗҫлемелли паллӑ. Кашни колхозникпе колхозницӑна уйрӑм ӗҫсем ҫумне ҫирӗплетсе тухнӑ.

„Ҫамрӑк вӑй“ колхозӑн пӗрчӗллӗ тырӑсене 389 гектар ытларах, пӑрҫа йышши куљтурӑсем—45 гектар, кантӑр—4 гектар, ҫӗрулми—30 гектар, пахча ҫимӗҫсем—8 гектар пухса кӗмелле.

Колхозра 5 бригадӑ. Кашни бригадӑ ҫумӗнче пӗрер жнейкӑ, колхозра тепӗр молотилкӑ пур. Жнейкӑсене йусанӑ. Кашни жнейкӑ ҫумне тӑканакан пӗрчӗсене пухса пымалисене туса, майлаштарса лартнӑ.

Ҫӗнӗ тырра хумалли ампарсемпе складсене тасатас тӗлӗшпе йатарласа тунӑ икӗ звено—10 ҫын ӗҫлеҫҫӗ. Вӑрлӑхлӑх акнӑ тырӑсене хума 1-мӗш тата 2-мӗш номӗрлӗ ампарсене лайӑх тасатса хатӗрленӗ.

Колхозра тырпулсене пуҫтарса кӗнӗ вӑхӑтра уйра пӗтӗмпе 318 ҫын ӗҫлемелле. Вӗсене кашнинех уйрӑм ӗҫсем ҫумне ҫирӗплетсе тухнӑ. Вӗсем хӑйсене ҫирӗплетнӗ ӗҫсемшӗн ответлӑ пулса тӑрҫҫӗ.

Ӗҫлеме пултаракан лашасем колхозра пурӗ 82. Лашасене тырпулсене уйран пухса кӗнӗ чухне ӗҫлеме колхозниксене ҫирӗплетсе панӑ.

Вейӑлкӑ—1, сортировкӑ—2, трийӗр—1. Ҫаксем пурте йусавлӑ. Колхозӑн 90 михӗ, колхозниксен хӑйсен хуҫалӑхӗсенче—300 михӗ, 150 шӑналӑк. Ҫаксене пӗтӗмпех ҫуса дезинфекци тунӑ.

Кашни уйрӑм ӗҫ тӑрӑх нормӑсене пӑхса туса, колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗнче ҫирӗплетнӗ. Нормӑ тӑрӑх пӗр жнейкӑпа вӑйлӑ тырпула 7 гектар вырмалла, ҫурлапа пӗр ҫынӑн 0,10 гектар вырмалла.

4 лашапа ӗҫлемелли молотилкӑпа кунне кӗрхи тырӑсене 50 лав, ҫуртрисене 60 лав ҫапмалла. Молотилкӑ патӗнче 15 ҫын ӗҫлемелле. Унта камсем ӗҫлессине планра палӑртса хунӑ.

Ҫапнӑ тырӑсене турттарма автомашинӑ уйӑрнӑ. Комбайнпа 100 гектар пухса кӗмелле. Комбайнпа ӗҫлеме 4-мӗш тата 6-мӗш уйсенчи лайӑх участкӑсене уйӑрса хунӑ. Ҫав участкӑсене ҫумкураксенчен таса тытса тӑраҫҫӗ. Комбайн патӗнчен тырӑ турттарма кашни ҫменӑра 4 ҫын 3 лашапа ӗҫлемелле, комбайн хыҫӗнчен улӑма пуҫтарса турттарма 14 ҫынран пӗр звено организациленӗ.

Тырпулсене уйран пухса кӗме кашни бригадӑра 4—5-шер звено тунӑ. Бригадӑсенче машиноведсене уйӑрнӑ. Пӗрремӗш бригадӑра Ф. Йакимӑв, Й. Абрамӑв; иккӗмӗшӗнче—Охотникӑвпа Павлӑв; виҫҫӗмӗшӗнче—В. Охотникӑв; тӑваттӑмӗшӗнче—В. Башмаков тата С. Михайлӑв; пиллӗкмӗшӗнче—П. Никифӑрӑв, Й. Музалӑв йулташсем машиноведсем пулса тӑраҫҫӗ. Жнейкӑсемпе икӗ ҫменӑ ӗҫлеҫҫӗ. Кашни ҫменӑ ваљљи ултшар лаша уйӑрнӑ. Жнейкӑ хыҫҫӑн тырра 18—24 ҫын ҫыхса пыраҫҫӗ.

План тӑрӑх кӗрхи тырӑсене 4 кун хушшинче вырса пӗтермелле. Тырпулсене вырма тухсан, виҫҫӗмӗш кунӗнче комбайнпа ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ. Комбайн хыҫӑнчен пучахсене пухса пыма 10 ҫынран пӗр звено тунӑ. Тӑваттӑмӗш кунӗнче государствӑна тырӑ пама 3 мӗш тата 4 мӗш бригадӑсенче авӑн ҫапма тытӑнаҫҫӗ. Чи малтанхи тырра государствӑна леҫсе параҫҫӗ. Августӑн пӗрремӗш тӗлне кӗрхи тырӑсене государствӑна, МТС-не натурплатӑ парса татаҫҫӗ.

Тырӑ вырма тухсан, 6-мӗш кунӗнче кӗлтесене капана хывма тытӑнаҫҫӗ; ку ӗҫе 4 кун хушшинче вӗҫлеҫҫӗ.

Ҫуртрисене те 4 кун хушшинче, пӑрҫа йышши куљтурӑсене 2 кун хушшинче пухса кӗмелле.

Вӑрлӑхлӑх участкӑсене уйрӑм звеносем ытти тырпулсенчен уйрӑм пухса кӗреҫҫӗ. Вӑрлӑхлӑх тырӑсене пиллӗкмӗш бригадӑри иккӗмӗш итем ҫинче ҫапаҫҫӗ. Ҫапнӑ тырӑсене лайӑх тасатнӑ хыҫҫӑн 1-мӗш тата 2-мӗш номӗрлӗ ампарсене хываҫҫӗ.

Ҫапла ӗҫленипе „Ҫамрӑк вӑй“ колхоз тырпулсене кӗске срукра тата тӑкаксӑр пуҫтарса кӗрет. Кунта хаљ тырпулсене пухса кӗме тӗплӗн хатӗрленсе ҫитнӗ.

* * *

Тырпулсене пухса кӗмелли ӗҫ планӗсем кашни бригадӑрах пур, терӗмӗр. Кунта епӗр виҫҫӗмӗш бригадӑн ӗҫ планӗпе паллаштарасшӑн. Ку бригадӑн кӑҫал 85 гектар ҫинчен тырпулсене пуҫтарса кӗмелле. Ҫаксене пухса кӗме бригадӑ лайӑх хатӗрленсе тӑрат̌. Бригадӑра пӗр жнейкӑ. Ӗҫлеме пултаракан колхозниксем—46 ҫын. Вӗсене ӗҫсем ҫумне ҫирӗплетсе тухнӑ.

Виҫҫӗмӗш бригадӑра 4 звено тунӑ. Жнейкӑпа икӗ ҫменӑпа ӗҫлеҫҫӗ. Ирхине 2 сехетре ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ те каҫхине 10 сехетре ӗҫлеме чарӑнаҫҫӗ.

Вӑрлӑхлӑх акнӑ тырӑсене пӗрремӗш звено пухса кӗрет. Бригадӑ кӗрхи тырӑсене тата ҫуртрисене 4-шар кун хушшинче вырса пӗтерет. Государствӑна 25 центнӗр тырӑ, ийулӗн 25-мӗш тӗлне парса татаҫҫӗ.

Авӑна МК—1100 молотилкӑпа ҫапаҫҫӗ. Кӗрхи тырӑсене 2 кунта, ҫуртрисене 3 кунта ҫапса пӗтереҫҫӗ.

Гр. Калинин.

Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатӗнче

1938 ҫулта ӑҫта мӗнле сурт кӗрхи тырӑ акмалла

Чӑваш Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ, Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ ака планӗ тӑрӑх, 1938 ҫулта кӗрхи тырӑсенчен хӑш районта мӗнле сурт тата мӗн чухлӗ лаптӑк акмаллине кӑтартса приказ кӑларнӑ. Приказра палӑртнӑ тӑрӑх 1938 ҫулта колхозсенче ҫакӑн пек суртсене акмалла:

Ыраш

1. „Авангард“—Улатӑр, Патӑрйел, Вӑрнар, Йӗпреҫ, Канаш, Куславкка, Кувакинӑ, Сӗнтӗрвӑрри районӗсенче (Ҫавал шывӗн сулахай йенче ларакан колхозсемсӗр пуҫне, вӑл колхозсенче пурӗ 580 гектар „Вятка“ сурт акмалла). Ҫавӑн пекех Пӑрачкав (Сӑр шывӗн ку йенче ларакан колхозсемсӗр пуҫне—унта пурӗ 1.760 гектар Лисицин сурчӗ акмалла), Турхан, Трак, Вӑрмар, Ҫӗрпӳ, Шӑмӑршӑ, Шӑхасан, Шӑнкӑртам, Йелчӗк тата Тӑвай районӗсенче те „Авангард“ акмалла.

2 „Вятка“—Елӗк, Ишлей, Хӗрлӗ Чутай, Тутаркас, Шупашкар, Йетӗрне, Ҫӗмӗрле районӗсенче (Вӑрнар районӗпе чикӗре ларакан колхозсемсӗр пуҫне—вӑл колхозсенче 1 025 гектар „Авангард“ акмалла).

Кӗрхи тулӑ

Улатӑр районӗнче „Дюрабль“—200 гектар, ырашпа тулӑ гибричӗ—400 гектар тата „Мильтурум“—500 гектар; Елӗк районӗнчӗ „Дюрабль“—1 500 гектар;

Патӑрйел районӗнче „Дюрабль“—900, гибрид — 250, Симбилейӗвски—250 гектар;

Вӑрнар районӗнче „Дюрабль“—1050 гектар, гибрид—450 гектар;

Йӗпреҫ районӗнче „Дюрабль“—850, гибрид—200, „Мильтурум“—200 гектар;

Ишлей районӗнче „Дюрабль“—900, Симбилейӗвски—400 гектар;

Канаш районӗнче „Дюрабль“—450, гибрид—200, Симбилейӗвски—250 гектар;

Куславкка районӗнче „Лютесценс 0329“—1.120, гибрид—180 гектар;

Хӗрлӗ Чутай районӗнче „Дюрабль“—800, „Лютесценс 0329“—250 гектар;

Кувакинӑ районӗнче „Дюрабль“—1150, гибрид,—150 гектар;

Сӗнтӗрвӑрри районӗнче „Дюрабль“—1050, гибрид—50 гектар;

Пӑрачкав районӗнче „Дюрабль“—900, гирбид—200, Симбилейӗвски—250, „Лютесценс 0329“—50 гектар;

Турхан районӗнче „Дюрабль“—500, гибрид,—100, Симбилейӗвски—50 гектар;

Тутаркас районӗнче „Дюрабль“—700, гибрид—300, „Лютесценс 1060/10“—400 гектар;

Трак районӗнче „Дюрабль“—1400 гектар;

Вӑрмар районӗнче „Дюрабль“—350, гибрид—300, „Лютесценс 0329“—850 гектар;

Ҫӗрпӳ районӗнче „Дюрабль“—730, гибрид—250, Симбилейӗвски—400 тата вырӑнти сурт—120 гектар;

Шупашкар районӗнче „Дюрабль“—600, гибрид—100, Симбилейӗвски — 100, „Лютесценс 0329“—300 тата вырӑнти сурт—100 гектар;

Шӑмӑршӑ районӗнче „Лютесценс 0329“—550, Симбилейӗвски—100, гибрид—50 гектар;

Шӑхасан районӗнче „Дюрабль“—1250, гибрид—50 гектар;

Шӑнкӑртам районӗнче „Дюрабль“—200, гибрид—200 тата „Лютесценс 0329“—300 гектар;

Ҫӗмӗрле районӗнче „Дюрабль“—650 гектар;

Йетӗрне районӗнче „Дюрабль“—1000, „Лютесценс 0329“—300 гектар;

Йелчӗк районӗнче „Дюрабль“—600, гибрид—700, Симбилейӗвски—200 гектар;

Тӑвай районӗнче „Дюрабль“—400, гибрид—400, Симбилейӗвски—270, „Лютесценс 0329“—80 гектар.

Ыраш вӑрлӑхӗ „Авангард“, „Вятка“, Лисицин сурчӗ колхозсен хӑйсен вӑрлӑх участкисем ҫинчен илнисем пулмалла,—пахалӑхӗ, лайӑххаххи пулмасан, III-мӗш категори те йурат̌. Вӑрлӑх участкине аппробаци хыҫҫӑн бракланӑ пулсан, колхозсен харпӑр хӑй районӗнче пӗр пӗринпе улӑштарса суртлӑ вӑрлӑх илмелле. Вӑрлӑх участки ҫине акма (пӗтӗм лаптӑкран ¼ пайӗ) Госсортфон хатӗрленинчен „Авангард“ ҫурта улӑштарса илмелле пулат̌.

Кӗрхи тулӑ сурчӗсенчен „Дюрабль“, Симбилейӗвски, „Лютесценс 0329“ тата „Мильтурум“ суртсен вӑрлӑхӗ II-мӗш категоринчен кайа мар пулмалла, гибрид тата вырӑнти сурт ҫеҫ III-мӗш категорилӗ те пулма пултарат̌. Вӑрлӑхсем пурте вӑрлӑх участкисем ҫинчен илнисем пулмалла. Госсортфондпа заготзерно хатӗрленинчен хӑйсен лайӑх вӑрлӑх ҫитмен районсене ҫеҫ памалла пулат̌.

Вӑрлӑх пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе районсенчи ҫӗрӗҫ пайӗсене аппробаци тӑвас ӗҫе лайӑх организацилеме тата суртлӑ вӑрлӑх участкисене урӑх тӗрлӗ суртлӑ тырӑсене ҫумласа тасатма хушнӑ.

ПАТӐРЙЕЛ—ЙЕЛЧӖК

Ҫитменлӗхсене палӑртрӗҫ

„Чӑваш коммунӗн“ ийулӗн 8-мӗшӗнче тухнӑ номӗрӗнче ӑмӑртса ӗҫлекен Йелчӗк районӗ Патӑрйел районӗнчи колхозсем тырпулсене пухса кӗрес ӗҫе мӗнле хатӗрленсе пынине тӗрӗслени ҫинчен ҫырнӑччӗ.

Ийулӗн 5—6-мӗш кунӗсенче Патӑрйел районӗн делегацийӗ Йелчӗк районне кайса, тырпулсене пуҫтарса кӗме мӗнле хатӗрленсе пынине тӗрӗслерӗ.

Райҫӗрӗҫ пайӗ делегацине ӗнентернӗ тӑрӑх, Йелчӗк районӗнче 122 молотилкӑран—115, 262 жнейкӑран—255, 109 сортировкӑран—93 йусанӑ. Анчах, делегаци колхозсене тухса тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, йалхуҫалӑх машинисене йусас ӗҫ начах начар пыни палӑрчӗ. Аслӑ Йелчӗкри Ленин йачӗпе тӑракан колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пӗри пулса тӑрат̌. Ҫакӑн пек малта пыракан колхозра та 11 жнейкӑран—10, 4 молотилкӑран пӗрне ҫеҫ йусанӑ. Сортировкӑсем йусав ӑр. Йусанӑ машинӑсен пахалӑхӗ начар. Колхозра 2 автомашинӑ, пӗри ҫӳреме йурӑхсӑр. Горйучи хатӗрлемен. 6-мӗш бригадӑра 17 хӑмӑтран 9 хӑмӑчӗ лашасене кӳлме йурӑхсӑр. Ампарсене дезинфекци туман.

Шӑмалакри колхозра тырпулсене пухса кӗме хатӗрленес ӗҫ пушшех начар пӑрат̌. Машинӑсене ытла начар йусанӑ. 8 жнейкӑран пӗри те ӗҫлеме йурӑхла мар. Викӑ утӑлӑх ҫулма тухсан, икӗ сехетренех машинӑсем ҫӗмӗрӗлнӗ. Колхозра 11 ампар, анчах вӗсем тырӑ хума хатӗр мар-ха.

Йамансурари „Молот“ колхоз тырпулсене пухса кӗме лайӑх хатӗрленет. Йалхуҫалӑх машинисене йусаса пӗтернӗ, уйсем таса.

МТС-че те пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Ку вӑхӑтченех пӗр комбайна йусаса пӗтермен. Комбайнсемпе ӗҫлеме комбайнӗрсем ҫитмеҫҫӗ. „Иккӗмӗш пилӗкҫулӑх“ колхозра пайанхи кунччен комбайнсемпе ӗҫлеме участкӑсене уйӑрман.

Патӑрйел районӗн делегацийӗ Йелчӗк районӗнчи колхозсенче уйӗҫне хатӗрленес ӗҫре ҫакӑн пек чылай ҫитменлӗхсем пуррине палӑртса, ҫитменлӗхсене кӗске срукрах пӗтерме сӗнӳсем парса хӑварчӗ.

Ник. Пушкин.

Утӑ ҫулнӑ ҫӗрте

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. Пантӑкри Молӑтӑв йачӗпе тӑракан колхоз ийулӗн 1-мӗшӗнче улӑх утине ҫулма тухрӗ. Утӑ ҫулнӑ ҫӗрте бригадӑпа бригадӑ, колхозникпа колхозник хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса пынӑ. Ӑмӑрту мӗнле сарӑлса пынине тата уйрӑм стахановӗцсен чаплӑ ӗҫӗсене ҫтена хаҫачӗсем урлӑ ҫутатса пыраҫҫӗ.

Колхозниксем хушшинче куљтмассӑлӑ ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ. Ӗҫ хыҫҫӑн пушӑ вӑхӑтсенче патефон итлеҫҫӗ. Колхозра организациленӗ шавлӑ оркестр аван ӗҫлесе пырат̌. Кунпа пӗрлех шашкӑла тата шахмӑтла выљљаҫҫӗ. Хаҫат-журналсене вӑхӑтра ҫитерсе параҫҫӗ, ҫӗнӗ хыпарсем ҫинчен вуласа ӑнлантараҫҫӗ. Куљтмассӑлӑ ӗҫе вулав ҫурчӗн пуҫлӑхӗ Катейкин йулташ йӗртсе пырат̌.

Куљтмассӑлӑ ӗҫе тата агитаци ӗҫне аван туса пынипе колхозниксемпе колхозницӑсем утӑ ҫулнӑ ҫӗртех Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑхӑн займне 3000 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ.

Колхоз ийулӗн 7-мӗшӗнче утӑна типӗтсе, пӗтерсе, капана хыврӗ.

Й. Самарин.
Й. Ҫигайӗв.

Вулав ҫурчӗ хӗрӳ ӗҫҫине тухас умӗн

ШӐХАСАН. Ӑвӑспӳрт Кипечри вулав ҫурчӗ РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлав кампанинче аван ӗҫлерӗ. Халӗ вӑл тырпулсене пухса кӗрес ӗҫе хутшӑнма хатӗрленет.

Вулав ҫуртне пурӗ 10 тӗрлӗ хаҫат-журнал килсе тӑрат̌. Халӗ ҫӗнӗрен художествӑлӑ литературӑ 100 тенкӗлӗх илчӗҫ. Кусемсӗр пуҫне, вулав ҫуртӗнче радио, купӑс, биллиард пур. Кашни ернере 2 хут ҫтена хаҫачӗ тухса тӑрат̌. Ҫтена хаҫачӗ тырпулсене пуҫтарса кӗме хатӗрленес ыйтусене ҫутатса пырат̌. Стахановӗцсене кӑтартат̌, найансене питлет, социалисӑмлӑ ӑмӑртура малта пыракансене мухтат̌.

Хӗрӳ ӗҫҫинче вулав ҫурчӗ хӑйӗн ӗҫне хире, бригадӑна куҫарат̌. Бригадӑсенче хаҫат редакторӗсем, хаҫат-журнал вулакансем, политинформацисем пулаҫҫӗ.

Вулав ҫурчӗн пуҫлахӗ Петров халӑх хушшинче ӗҫлеме йурат̌. Вӑл хӑй таврӑ йалти куљтурлӑ вӑйсене йавӑҫтарат̌.

М. Дмитрийӗв.

И. ЛЕВИН

Советӑн 1918 ҫулти пӗрремӗш Конституцийӗ

20 ҫул кайалла, 1918 ҫулти ийулӗн 10-мӗшӗнче, Советсен Пӗтӗм Росҫийӑри V-мӗш Сйеҫӗ советӑн пӗрремӗш Конституцине—Росҫийӑ Советлӑ Федеративлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗн Конституцине йышӑннӑ. РСФС Республикӗн 1918 ҫулти Конституцийӗ ытти совет республикӗсен конституцийӗсемшӗн—1922 ҫулта советӑн нумай нацилӗ сойузлӑ пӗр государствине—ССР Сойузне пӗрлешнӗ Украинӑ, Белоруҫҫи т. ыт. республикӑсен конституцийӗсемшӗн образец пулса тӑчӗ.

РСФС Республикӗн пӗрремӗш Конституцийӗ совет влаҫӗн малтанхи 8 уйӑх хушшинчи калама ҫук пысӑк ҫӗнтерӗвӗсемпе ҫитӗнӗвӗсене пӗтӗҫтерсе тухнӑ.

„Совет Конституцийӗ мӗн панине,—тенӗ Ленин 1920 ҫулта,—пӗр государствӑ та 200 ҫул хушшинче те пама пултарайман“[1].

Хаљчен илтмен кӗске срукрах совет влаҫӗ буржуазий массӑсене чуралантармалли тата пусмӑрламалли государствӑ машинине ҫӗмӗрсе тӑкрӗ, пролетариат диктатурине ҫирӗплетсе хучӗ, шултра промышлӗнӑҫа, банксене, транспӑрта, ҫӗре тата ҫӗр айӗнчи пуйанлӑхсене пӗтӗм халӑх пурлӑхӗ туса хучӗ, ӗлӗк пусмӑрта пурӑннӑ нациоњнӑҫсене ирӗке кӑларчӗ. Октаберти Аслӑ социалисӑмлӑ ревољуци, ӗҫҫыннисене государствӑ управленине йавӑҫтарса, чӑнчӑн демократин хальччен курман ҫӗнӗ формисене турӗ.

Ҫамрӑк совет влаҫӗн ҫӗнтерӗвӗсем социалисӑмӑн ҫӗршывӗ тата ҫӗршыв тулашӗнчи мӗн пур тӑшманӗсене хайаррӑн уртарса йачӗҫ. Ес-ерсем тата совета хирӗҫле ытти партисем Самарта, Саратӑвра, Царицынра т. ыт. хуласенче те восстанисем организациленӗ. Украинӑпа Белоруҫҫине Германи интервенчӗсем йарса илнӗ пулнӑ. Владивостокра Йапони ҫарӗсем, Мурманскра—Англи отрйачӗсем анса йулнӑ. Контрреволюци Ҫӗпӗрте влаҫа вӑхӑтлӑха хӑйӗн аллине йарса илме пултарнӑ.

Совет влаҫне хирӗҫ уҫҫӑн тӑрса кӗрешекен тӑшмансен вӑрттӑн сойузникӗсем—сулахай ес-ерсем, бухаринҫӑсем, троцкиссем вӗсемпе таччӑн ҫыхӑнса ӗҫленӗ. Советӑн пӗрремӗш Конституцине йышӑначчен 3 кун маларах ҫеҫ Мускавра сулахай ес-ерсен пӑлхавне путарса лартнӑ. Совета хирӗҫле „сылтӑмла-троцкисла блок“ процесӗнче ҫакӑ уҫҫӑн палӑрчӗ: сулахай ес-ерсен хыҫӗнче Бухарин, Пйатаков тата вӗсен ирсӗр банди тӑнӑ, ҫавсем ӑнтӗ сулахай ес-ерсене совет влаҫне хирӗҫ преступленилӗ пӑлхав тума пиллесе чӗрӗ вӑй парса хавхалантарнӑ. Вӗсем В. И. Ленина, И. В. Сталина, Й. М. Свердлова тискеррӗн вӗлерме шухӑшланӑ. Вӗсем, троцкиссем, зиновйӗвҫӑсем тата ытти предателсемпе изменниксем пекех, пролетарилӗ ревољуцие вӑрҫӑра ҫӗмӗрсе тӑкма тӑрӑшнӑ.

Республикӑшӑн ҫакӑн пек йавӑр тапхӑрта, граждӑн вӑрҫи пуҫланнӑ условисенче, Советсен Пӗтӗм Росҫийӑри V-мӗш сйеҫӗ тӗнчипе пӗрремӗш пролетарилӗ государствӑн Конституцине йышӑннӑ.

1918 ҫулхи Конституци вӑл—Советсен Пӗтӗм Росҫийӑри III-мӗш сйеҫӗ хыҫҫӑн советӑн тата партин аслӑ органӗсенче Ленинпа Сталин йертсе пынипе тунӑ пысӑк ӗҫӗн ҫимӗҫӗ пулнӑ. Ҫав сйес 1918 ҫулти йанварте ӗҫҫыннисемпе експлоатацилекен халӑх прависен декларацине йышӑннӑ, Сталин йулташ доклачӗ тӑрӑх Росҫийӑ республикӗн федеративлӑ учрежденийӗсем ҫинчен постановлени йышӑннӑ тата Пӗтӗм Росҫийӑ Тӗпӗҫтӑвкомне „советсен ҫитес сйесне тӑратма... Росҫийӑ федеративлӑ республикӗн Конституцийӗн тӗп положенийӗсене“ хатӗрлеме хушнӑ.

Пӗтӗм Росҫийӑ Тӗпӗҫтӑвкомӗ тунӑ конституци комиҫҫийӗ Сталин йулташ ҫывӑх хутшӑнса ӗҫленипе тата вӑл тӳрех йертсе пынипе ӗҫленӗ. Конституци никӗсне—ӗҫҫыннисемпе експлоатацилекен халӑх прависен Декларацине тата Сталин йулташ туса хатӗрленӗ „Росҫийӑ Социалисӑмлӑ Федеративлӑ Республик Конституцин пӗтӗмӗшлӗ положенисене“ хывнӑ пулнӑ. Ҫав положенисем совет государствин тӗп задачисемпе принципӗсене калама ҫук уҫӑмлӑн палӑртса панӑ.

„Пӗтӗмӗшлӗ положенисенчи“ пунктсенчен пӗри ҫапла каланӑ: „Хаљхи вахӑтри переходлӑ тапхӑрта ҫӗршывӑн политикӑлӑ пурнӑҫне ҫавӑн пек туни тӗп задачи,—буржуазине йӑлтах путарса лартас, ҫынна ҫын експлоатацилессине пӗтерес тата социалисӑм туса хурас... тӗллевсемпе Пӗтӗм Росҫийӑра хӑватлӑ политикӑлӑ влаҫ—хуласри тата йалти пролетариатӑн диктатурине туса хуни пулат̌“.

В. И. Ленин Советсен Пӗтӗм Росҫийӑри VI-мӗш Сйесӗнче ҫапла каланӑ:

„Епӗр пӗлетпӗр, советӑн иауљ уйӑхӗнче ҫирӗплетнӗ ҫак конституцине пӗр-пӗр комиҫҫи пуҫран шухӑшласа кӑларман, йуриссем ҫырман, ытти конституцисенчен ҫырса илмен. Пирӗн конституци пек конституцисем тӗнчере пулман. Ун ҫине пролетарилӗ массӑсем ҫӗршыври тата пӗтӗм тӗнчери експлоататӑрсене хирӗҫ кӗрешнин тата организацилессин опытне ҫырса хунӑ“[2].

1918 ҫулти Конституцин пӗрремӗш сыпӑкӗ вырӑнче—советсен Пӗтӗм Росҫийӑри III-мӗш Сйеҫӗ ҫирӗплетнӗ ӗҫҫыннисемпе експлоатацилекен халӑх прависен Декларацийӗ пулнӑ. Ҫав деклараци Росҫийӑна рабочисен, салтаксен тата хресченсен депутачӗсен советӗсен республики пулат̌ тесе каланӑ, вӑл республикӑна ирӗклӗ нацисен ирӗклӗ сойузӗ тӑрӑх, нацилӗ совет республикӗсен федерацийӗ пек тӑваҫҫӗ. Ҫав деклараци совет влаҫӗн малтанхи тапхӑрӗнче туса иртернӗ тӗп ӗҫӗсене итогласа тухнӑ, вӑл вӑхӑтра командлӑ позицисене тата ҫӗршывӑн економикине алла ҫавӑрса илмелле пулнӑ, кивӗ государствӑ машинине ҫӗмӗрсе ҫӗнӗ государствӑ аппаратне тумалла пулнӑ. Деклараци, пурте пӗлеҫҫӗ, совет влаҫӗ кӑларнӑ декретсене—ҫӗр ҫинчен, рабочи контрољ, банксене национализацилесси, Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарне тӑвасси ҫинчен кӑларнӑ декретсене ҫирӗплетсе пӗтӗҫтерсе тухнӑ.

РСФС Республикӗн 1918 ҫулти Конституцинче пролетарилӗ ревољуци кӗрешсе илнӗ мӗн пур демократилӗ правасемпе ирӗклӗхсене ҫырса тухнӑ.

Хӑйсен шухӑшӗсене палӑртма ӗҫҫыннисене чӑн-чӑн ирӗк памалла тӑвас тесе, совет влаҫӗ пичет капитала пӑхӑнса тӑнине пӗтерсе лартнӑ, хаҫатсем, брошӳрӑсем, кӗнекесем кӑлармалли мӗн пур техникӑлӑ тата материаллӑ хатӗрсене рабочи класпа чухӑнсен аллине панӑ.

„Пирӗн советсем,—тесе ҫырнӑ Ленин,—мӗн пур лайӑх ҫуртсене, хуласенче те тата йалсенче те пуйансенчен туртса илчӗҫ, ҫав ҫуртсене пурне те рабочисемпе хресченсене вӗсен сойузӗсемпе пухӑвӗсем ваљљи пачӗҫ. Акӑ пирӗн пухусен ирӗклӗхӗ—ӗҫҫыннисем ваљљи. Акӑ пирӗн советӑн, пирӗн социалисӑмлӑ конституцин шухӑшӗле содержанийӗ!“[3].

1918 ҫулхи Конституци ҫине—совет республикӗ хӑйӗн умне рабочисемпе хресченсене туллин, пур йенӗпе те тата тӳлевсӗр вӗрентес задачӑ лартат̌, тесе ҫырнӑ. Конституци—ӗҫлев республикӑри мӗн пур граждӑнсен обйазанноҫӗ пулат̌ тесе йышӑннӑ тата: „Ӗҫлемен ҫын ан ҫитӗр!“ тесе лозунг панӑ.

Конституци совет влаҫӗн ревољуци вӑхӑтӗнче йӗркеленнӗ лайӑх—ҫӳлтен айала ҫитиех лайӑх—организацине ҫирӗплетнӗ.

Конституци тӑрӑх, республикӑра государствӑн чи аслӑ влаҫӗ Советсен Пӗтӗм Росҫийӑри Сйеҫӗ пулнӑ, сйессем хушшинчи тапхӑрта чи аслӑ влаҫ Пӗтӗм Росҫийӑри Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет пулнӑ. Вырӑнсенче пӗтӗм влаҫ советсен аллинче тӑнӑ. Конституци тӑрӑх, Пӗтӗм Росҫийӑ Тӗпӗҫтӑвкомӗ Халӑх Комиссарӗсен Советне туса хурат̌. Депутатсене кайала чӗнсе илме суйлавҫӑсене пысӑк права панӑ.

Халӑхӑн айалти сийӗсене ирӗке кӑларса вӗсене государствӑ управленинче хутшӑнса ӗҫлеме йавӑҫтарнӑ совет ҫистеми тӗнчере чи демократилӗ ҫистемӑ пулнӑ. „Пролетарилӗ демократи,—тесе ҫырнӑ Ленин,—кирек мӗнле буржуалӑ демократирен те мӗлйун хут демократилӗрех; Совет влаҫӗ чи демократилӗ, буржуалӑ республикӑран мӗлйун хут демократилӗрах“[4].

РСФС Республикӗн 1918 ҫулти Конституцийӗ ҫапла пӗлтернӗ: Рабочисемпе Хресченсен Аслӑ Ревољуцийӗ ҫӗнтерсе илнисене пур майсемпе те сыхласа тӑрас тӗллевсемпе Росҫийӑ Советлӑ Федеративлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗ социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршыва хӳтлесси республикӑри мӗн пур граждӑнсен обйазанноҫӗ, тесе йышӑнат̌ тата пурне те тивӗҫ ҫар повинноҫӗ туса хурат̌“. Анчах та алла пӑшал тытса ревољуцине хӳтлес хисеплӗ правана ӗҫҫыннисене ҫеҫ панӑ.

Советӑн 1918 ҫулти Конституцийӗ вӑл тапхӑрти условисене палӑртса тӑнӑ, вӑл тапхӑрта експлоататӑрла классене пӗтӗмпех пӗтермен пулнӑ-ха, унчухне, ӗҫлемесӗр пурӑнакан тата експлоататӑрла елементсем „...халӑха хирӗҫ уҫҫӑнах вӑрҫнӑ тата совет саккунӗсене хирӗҫ тӑнӑ“ (Сталин), унчухне хресчен хуҫалӑхӗн пуҫ пулса тӑракан форми пӗччен хуҫалӑх пулнӑ-ха. Ҫав условисенче пролетариат диктатурине тӗреклетес тата государствӑна пролетари йенчен йертсе пырас интерессем пурне те тивӗҫ тата пӗртан суйлав правине кӑштах пӳлсе пырассине хӑшпӗр вӑхӑтлӑха ҫирӗплетсе хӑварма ыйтнӑ, тӳррипе каласан—експлоататӑрла классене пурне те суйлав прависӗр хӑварма ыйтнӑ.

Конституци пролетариата советсенче йертсе пыракан вырӑн йышӑнмалла тунӑ. Суйлав ҫистеми тӑрӑх, рабочисем советсенче хресченсем пек мар, пысӑкрах пай йышӑннӑ. Суйлав правине ҫавӑн пек пӳлнисене партипе совет

---

[1]) В. И. Ленин. Сочинения. Том XXV, стр 144.

[2]) В. И. Ленин. Сочинения. Том XXIII, Стр. 256.

[3]) В. И. Ленин. Сочинения. Том XXIII. Стр. 18[illegible]

[4]). Ҫавӑнтах. Стр. 350.

П А Р Т И П У Р Н Ă Ç Ĕ

Шупашкарти парторгсемпе партком çекретарĕсен канашлăвĕ

Партине çĕнĕ членсем илесси — политикăлă пысăк ĕç

Ийулĕн 7-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакципе ПСК(б) Партин Шупашкар хула комитечĕ парти ÿсĕмĕ çинчен тăракан ыйтусем тăрăх Шупашкарти пуçламĕш парторгонизацисен партком çекретарĕсемпе парторгсен канашлăвне иртерчĕç.

Канашлура çакă палăрчĕ: Шупашкар парторганизацинче парти Тепкомĕ 1938 çулти мартăн 4-мĕшĕнче „Парти организацисен ПСК(б) Партине çĕнĕ членсем илес ĕçĕсем çинчен" йышăннă постановленине, çавăн пекех тата çак ыйту тăрăх ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ, Шупашкар парторганизацин 4-мĕш конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртесси çителĕксĕр пырать. Чылай пуçламĕш парторганизацисенче (Типографи, Макарон хапрăкĕ, Тир-сăран савăчĕ, Осоавиахим, Чăвашторг т. ыт. те) 1936 çулăн вĕçĕнчен пуçласа çак тарана çитиччен парти ретне пĕр çын та илмен. Партине илес ĕç çакăн пек начар тăни вăл чылай пуçламĕш парторганизацисенче партилĕ-политикăлă ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартманни çинчен, сочувствуйушчисемпе, комсомол тата партире тăман актив хушшинче ĕçлеменни çинчен калать.

Чылай парторганизацисенче партири тата партире тăман бођшевиксене вĕрентсе ÿстерессишĕн тăрăшмаççĕ. Шупашкарти типографинче парти историне вĕренмели кружок виççĕмĕш темăна вĕренсе çитнĕ хыççăн чарăнса ларнă.

ССРС Верховнăй Совечĕн суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче, унтан союзлă республикăсемпе автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче парти тавра çĕнĕ актив ÿсе çитĕнчĕ. Чылай парторганизацисенче çак актив çинчен манма та ĕлкĕрнĕ. Уйрăм пуçламăш парторганизаци руководителĕсем рабочисен политикăлă тата производствăлă активлăхĕ хăпарнине курмаççĕ. Унтан та ытларах — хăшпĕр руководителсем тÿррех: пирĕн производстварт рабочисен политикăлă пĕлĕвĕ ытла та айалта тăрать, теççĕ. Çавăн пек шутлать, сăмахран, Макарон хапрăкĕнчи пуçламĕш парторганизацин парторг заместителĕ Данилин йулташ.

Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче: пирĕн работниксем пĕрмай улшăнса тăраççĕ, çавăнпа та партире тăман активпа пирĕн ĕçлеме май çук, тесе çĕрĕк теори туртса кăларнă. Партире тăман активпа ĕçлемен пиркийех ĕнтĕ кунта пĕр сочувствуйушчи те çук. Орлов парторг каланă тăрăх, 1934 çулта партилĕ-политикăлă ĕçе вăйлатасси çинчен парти пухăвĕсенче пĕр ыйту та сÿтсе йавман. Çакăн хыççăн ыйтас килет: мĕн тăваççĕ-ши Çутĕç Халăх Комиссариатĕнчи пуçламĕш парторганизацинче? Паллах, нимĕн те тумаççĕ. Ахађтен мар ĕнтĕ кунта парти кандидачĕсем 1926 çултанпа парти ретне куçаймаççĕ.

Иертсе пыракан работниксем хăйсем çапла начар ĕçлеççĕ пулсан, вĕсенчен ĕçре тĕрĕсленнĕ, парти ĕçĕшĕн кĕрешме пултарнине кăтартнă, производствăра лайăх ĕçлесе мала тухнă рабочи-стахановецсен партине кĕрес турăмăн пуçне тăрассине кĕтме çук. Чылай парторганизацисенче партине çĕнĕрен илнĕ çынсене вĕрентсе ÿстерессине кирлĕ пек туса пымаççĕ, хăшĕ пĕрисем ку ĕçе пачах хакламаççĕ.

Партине çĕнĕрен илес ĕç çителĕксĕр пыни чи малтан пуçламĕш парторганизацисем çителĕксĕр ĕçленинчен килет. Çавăнпа та чи малтан парторганизацисен хăйсен ĕçĕсене урăхлатса çĕнетмеле. Сочувствуйушчисене, комсомолецсене суйлав вăхăтĕнче ÿссе çитĕннĕ партире тăман активиссене пур йенчен те парти ĕçне хутшăнтарма тăрăшмала. Вĕсене парти шкулĕсенче вĕрентмеле, партин уçă пухăвĕсене чĕнмеле, канашлусене пухса калаçмала. Ку ĕçре ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн те пуçламĕш парторганизацисене пысăк пулăшу памала.

Парторгсем калана сăмахсене епĕр кĕскен пичетлетпĕр.

Пулăшни кирлĕ

БЫЗĂВ

Тир-сăран савăтĕнчи парторг

Парторганизаци ĕçне хакланă чухне йаланах: парторганизаци партире тăман рабочисемпе, колхозниксемпе тата служăшчисемпе мĕнле çыхăнса тăнине тĕп вырăна хураççĕ. Анчах пирĕн пуçламĕш парторганизаци хађхи вăхăтра массăпа çителĕклĕ çыхăнса ĕçлет, теме пултараймастпăр. Çавăн пекех рабочисем хушшинче политикăлă воспитани ĕçне те кирлĕ пек организацилемен-ха. 1937 çулта епĕр ПСК(б)П историне вĕренмели кружок организацилерĕмĕр. Кружок 1938 çулти апрел уйăхĕнчен ĕçлекелерĕ те ĕçлеме чарăнчĕ. Хађ ĕнтĕ пропагандис çук пирки занђатисем пулмаççĕ.

Партине кĕме тивĕçлĕ рабочисене парти ретне илес тĕлĕшпе ку таранччен калама çук начар ĕçлесе пынă. Çавăнпа ĕнтĕ примерлă рабочисем партине кĕреймесĕр тăраççĕ. Пирĕн савăтра стахановецсем 43 çын, ударниксем 45 çын. Çак йулташсем хушшинче политикăлă воспитани ĕçне организацилесе, вĕсенчен чи примерлисене, шанчăклисене парти ретне илме тăрăшатпăр.

Ку таранччен ĕç начар пычĕ пулсан, малашне ăна апла хăварма пултараймастпăр: ĕçе вăйлатас пулать. Ĕçре çакăн пек калама çук пысăк çитменлĕхсем пулса пыни вăл — епĕр ĕçлеме пĕлменнинчен, опыт сахаллинчен те нумай килчĕ.

Пирĕн опыт

МУРЗИН

Йуçтици Халăх Комиссариатĕнчи партком çекретарĕ

Йуçтици Халăх Комиссариатĕнчи парти комитечĕн кивĕ составĕнче тăшманла етемсем ларнă. Унта вĕçĕмсĕр тавлашу, хирĕçÿ пулнă. Парти комитечĕ партилĕ-политикăлă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Сочувствуйушчисемпе, комсомолецсемпе, партире тăман активпа ĕçлемен пиркийех 1937 çулта пĕр çынна та парти ретне илмен. Çав вăхăтрах пирĕн парторганизаци парти документчĕсене çухатас тĕлĕшпе Шупашкар парторганизацинче „чапа" тухнă, 4 коммунис парти документчĕсене çухатнă.

Отчотпа суйлав пухăвĕнче çак ыйтусем питĕ çивĕччĕн тăчĕç. Пуху парторганизаци ĕçне тепренех урăхлатса çĕнетме хушса хăварчĕ. Çĕнĕ партком суйларĕ.

Епĕр паркома суйланнă çĕнĕ çынсем, хамăр ĕçе коммуниссемпе комсомолецсене, партире тăман актива бођшевисăма вĕрентессинчен тытăнтăмăр. Вĕсене вĕрентме 5 кружок турăмăр: ленинисăм, философи, парти истори кружокĕ 2 тата текушчи политикă кружокĕ. Ку кружоксенче коллективри 106 çынтан 103 çын вĕренет. Занђатисем вăхăтра, пĕр сиктермесĕр пулса пыраççĕ. Парти комитечĕ пропагандиссене пухса семинарсем иртерет.

Кунсăр пуçне тата епĕр кашни кун хаçатсем тăрăх 25 минут хушши политинформацисем иртеретпĕр. Ку ĕçе туса пыма 6 кружок организациленĕ. Ку кружоксене кашни çыннăн политикăла пĕлÿне шута илсе тунă. 1937 çулти нойабĕртен вара ку кружоксенче 623 хут политинформаци туса иртернĕ.

Коммуниссемпе партире тăманнисен активлăхĕ хăпарни палăрать. Кружокра вĕренекенсем хăйсем агитатăрсем пулса тăчĕç. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра 42 агитатăр ĕçлерĕç. Чинайĕвă йулташ участкăри суйлав комиççи членĕ, Воронкова йулташ участкăри суйлав комиççин çекретарĕ пулса ĕçлерĕç. Ку çынсене парторганизаци пăхса ÿстерчĕ.

Иртнĕ суйлав вăхăтĕнче активлă ĕçлекенсенчен 5 çынна парти ретне илтĕмĕр, 4 çынна парти членнĕ куçартăмăр. Халĕ каллех 3 çынна парти кандидатне илме, 2 çынна парти членне илме хатĕрлесе çитерне.

Партире тăман активиссене партине кĕме мĕнле пулăшатпăр епĕр? Пирĕн организацире парти ĕçĕшĕн тăракансем сахал мар. Анчах хăшпĕрисем партине кĕме зайавленисем пама хăймасăр тăраççĕ. Çавăнпа та ку ĕçре пулăшни те кирлĕ. Акă, Гаврилăв йулташ, активлă комсомолец. Суйлав вăхăтĕнче участкăри суйлав комиççин çекретарĕ пулса ĕçлерĕ. „Епĕ икĕ çул хушши ĕнтĕ партине кĕме хатĕрленетĕп, кружокра та лайăх вĕрентĕм. Парти программипе уставне лайăх ăнланса илтĕм. Анчах çавах та политикăлă пĕлÿ çитетеклĕ мар пуљ тесе, епĕ парткома зайавлени пама хăймасăр танă", тет Гаврилăв йулташ. Епĕр партире тăман актива пур йенчен те парти ĕçне хутшăнтарма тăрăшнă. Вĕсене партин уçă пухăвĕсене чĕннĕ, канашлусем иртерне, тата вĕсене уйрăм порученисем парса ĕçре тĕрĕсленĕ.

Партине илнĕ çынсене пурне те парти вĕрентĕвне хутшăнтарнă. Вĕсене парти порученисем парса парти ĕçне хутшăнтаратпăр. Анчах епĕр отчотпа суйлав пухăвĕн решенисене пурнăçласа çитерне, тесе калама пултараймастпăр. Иртнĕ суйлавра пирĕн агитатăрсем активлăн ĕçлерĕç. Ку актива малашне те çирĕплетсе пымала. Ку ĕçре хула комитечĕн те пире пулăшмала. Йулашкинчен çакна калас пулать: пуçламĕш парторганизаци партине илнĕ, хула комитечĕ çирĕплетнĕ çынсенчен 4-шĕн те ĕçем çаплах Обкомра пăхса тухмасăр выртаççĕ. Обком мĕн тума шутлать — вăл пире паллă мар.

Ответлă та хисеплĕ ĕç

ДЕРЎГИН

Шупашкарти спирт савăтĕнчи парторг заместителĕ

Епĕр коммуниссен пухăвĕнче ПСК(б)Парти Тепкомĕ парти ретне çĕнĕ членсем илесси çинчен йышăннă постановленине сÿтсе-йаврăмăр та унта кăтартнисене пурнăçлама тытăнтăмăр. Чи малтанах рабочисем хушшинче политикăлă воспитани ĕçне тивĕçлипе организацилес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕмĕр. Çак кĕске вăхăтра пĕр çынна сочувствуйушчисен ретне, стахановкă Черновă йулташа парти кандидатне илтĕмĕр.

Паллах ĕнтĕ, ку питĕ çителĕксĕр-ха, епĕр ăна лайăх пĕлетпĕр. Рабочисем хушшинче парти ретне кĕме тивĕçлĕ, шанчăклă йулташсем нумай. Уйрăмăнах савăтра ĕçлекен çамрăк рабочисем çинчен манмала мар. Пирĕн комсомол организацинче 13 комсомолец. Вĕсенчен парти ретне кĕме хатĕрленсе çитнисем пур. Комсомолецсене парти ретне куçма комсомол организацин хăйĕн пулăшса пымала, анчах пулăшас вырăнне чăрмантарса пынисем те курăнаççĕ. Акă, Хмара йулташ рекомендаци ыйтса панă зайавленине тăватă уйăх хушши пăхса тухмасăр выртарнă.

Çавăнпа пĕрлех комсомолецсен хушшинче ĕçлеме уйăрса хунă хăшпĕр коммуниссем çинчен те асăнмасăр иртсе кайма йурамасть. Комсомолецсем хушшинче ĕçлеме Пугин йулташа уйартăмăр. Анчах вăл çав хисеплĕ те ответлă ĕçе пурнăçламарĕ, комсомолецсем унтан пулăшу ыйтма пырсан йаланах пăрăнса йулнă: — „вăхăт çук" тенĕ.

Пирĕн парторганизаци ĕçĕнчи тĕп çитменлĕх — сочувствуйушчисемпе план тăрăх ĕçлесе пыманни, парти ретне кĕрес текен комсомолецсене пулăшманни. Парти пухăвĕсене те йаланах хупă пухусем туса иртерне. Ку та ĕнтĕ çитменлĕх. Сайра хутран уçă пухусем туса, унта партире тăман рабочисемпе служăшчисене те йавăçтармала. Малашнехи ĕçре епĕр çак çитменлĕхсене асра тытса, вĕсене кĕске вăхăтра пĕтерме тăрăшăпăр. Шанчăклă та примерлă рабочисене Ленин—Сталин парти ретне илесси вăл — пирĕншĕн пысăк та ответлă тата хисеплĕ ĕç пулса тăрать.

Партире тăман активпа куллен ĕçлесе пымала

ЗОЛОТНИКОВ

Шупашкар хула совечĕн партком çекретарĕ

Партине çĕнĕрен илес пирки парти Тепкомĕ 1938 çулхи март уйăхĕнче уйрăм постановлени йышăннă. ПСК(б)П Шупашкар хула организацин IV-мĕш конференцийĕ те хула парторганизацин ÿсĕмĕ çителĕксĕр пынине шута илсе, ПСК(б)П хула комитетне çак ĕçе тата та лайăхлатма хушнă. Ку шута пирĕн парторганизаци те кĕрет. Пайанхи канашлăва парторганизацисенче партине çĕнĕрен илес ĕç мĕншĕн начар пыни çинчен сÿтсе йавма пухнă. Ман шутпа ку канашлăва хăйĕн вăхатĕнче пухнă.

1938 çулта епĕр пĕр çынна çеç парти ретне илнĕ, тепĕр çынна сочувствуйушчине илнĕ. Халĕ виçĕ çын кандидатран партине куçма хатĕрленеççĕ. Анчах 2 çын партине кĕме панă зайавленисем март уйăхĕнчепе пăхса тухмасăр выртаççĕ: рекомендацисем çитмеççĕ. Хăшпĕр коммуниссем (Соловйов йулташ) лайăх ĕçлекен çынсенех „епĕ ăна пĕлместĕп" тесе рекомендаци памасăр тăнă. Партине кĕме панă зайавленисене рекомендателсем пухăва пыман пирки вăхăтра пăхса тухманнисем те пулнă.

Партине çĕнĕрен илес ĕç начар пынин сăлтавĕ вăл — партире тăман активпа тата комсомолпа çителĕксĕр ĕçлени. Хула совечĕ çумĕнчи комсомолăн пуçламĕш организаци питĕ начар ĕçленĕ. Парторганизаци те комсомол организацине пулăшма çирĕплетнĕ коммуниссене вĕçĕ-хĕррисĕр улăштарнипех лăпланнă, комсомол организацин ĕçĕпе çителĕклĕ интересленмен. Комсомол организаци начар ĕçлени комсоргран килнĕ. Халĕ Петров йулташа комсорга суйласа лартнă хыççăн, комсомол организаци ĕçлеме пуçларĕ. Пĕр уйăх хушшинче 3 çын комсомола кĕме зайавленисем панă.

Партире тăман активпа ĕçлессине епĕр ку таранччен йĕркелемен. Ку ĕçре пысăк улшăну тума тивет. Сочувствуйушчисемпе епĕр парти вĕренĕвне хутшăнтарнă. Партире тăман актива та çавăн пекех малашне кружоксенче вĕрентме, парти ĕçне хутшăнтарма шутлатпăр. ПСК(б)П хула комитет инструктăрĕсем те ку ĕçре пире пулăшмала. Анчах вĕсем пирĕн организацине 2—3 уйăхра та пырса курман.

власĕ вăхăтлăха тунăскерсем, тесе пăхнă.

1936 çулти Сталинла Конституци тата пĕтĕмпех унпа килĕштерсе тунă союзлă республикăсен çĕнĕ Конституцийĕсем малтанхи Конституцийĕсем çине çырса хунă суйлав правине пÿлнисене пурне те йăлтах прахăçа кăларчĕç.

Сталинла Конституци совет демократине тата çÿлерех сыпăка куçарать, çакна пирĕн çĕршывра социалисăмлă строй çĕнтернине пула тума пултаратпăр.

Сталинла Конституци советăн 1918 çулти пĕрремĕш Конституцин тĕп положенийĕсене малала вăйлатса пыни пулать. Сталинла Конституци çине социалисăмăн пĕтĕм тĕнчипе историлĕ çĕнтерĕвĕсене — сталинла икĕ пилĕкçуллăхсенче тунă çĕнтерÿсене çырса хунă. Çав çĕнтерÿсене фашисăмăн троцкисла-бухаринла агенчĕсене, шпионĕсене, сăтăрçăсене тата çынвĕлерсене хирĕç хăйаррăн кĕрешсе пырса çĕнсе илнĕ. 1918 çулти Конституци задачă вырăнне лартнă ĕçсенчен нумайĕшне хађ пурнăçа кĕртнĕ ĕнтĕ. Çакна Сталинла Конституцин содержанийĕ пуринчен те лайăхрах ĕнентерсе парать.

Совет граждăнĕсен Сталинла Конституци çине çырса хунă ĕçлев, канăç, вĕренÿ, ватăлсан тата ĕçлейми пулсан пурăнма пулăшу илес прависене пирĕн çĕршывра хуçалăхăн социалисăмлă çиçтеми пĕтĕмпех пуçпулса тăнипе чăнчăн пурнăçра чăнниех пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çĕнĕ суйлав çиçтемине пурне те тивĕç, пĕртан тата тÿрех суйлавмала правапа вăрттăн сасăлас суйлас никĕс çинче тунă; вăл тĕнчере чи демократилĕ суйлав çиçтеми пулса тăрать, влаç органĕсене чăннипех ирĕклĕн те чăннипех демократилĕн суйлама май парать.

ССР Союзĕ тунă социалисăмлă демократисăмăн чи çÿлĕ сыпăкĕ государствă влаçĕн аслă органĕсен çĕнĕ тата ытларах демократилĕ структуринче уççăн палăрса тăрать. Совет Союзĕнче саккун кăларакан пĕтĕм влаç — тÿрех халăхпа суйлакан Верховнăй Совет аллинче тăрать.

Союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене ийуњ уйăхĕнче суйланă чухне коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ калама çук чаплă çĕнтерÿ турĕ. Рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви мĕн тери ÿссе тĕреклениине çак суйлавсем калама çук уççăн кăтарса пачĕç.

Рабочи клас диктатурин никĕсĕ халиччен ихи пек те мар пысăккăн сарăлчĕ. Коммунисăм тата халăх — вăл хађ ĕнтĕ пĕрлĕхлĕ вăй. Совет халăхĕн морађлĕ-политикăлă пĕрлĕхĕ вăл бођшевикла партипе совет правителстви тавра, мĕн пур халăхсен йуратнă тусĕ, ашшĕ тата çулпуçĕ Сталин йулташ тавра пĕтĕçсе тăни — çаксене пурне те союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсенче уççăн демонстрацилесе панă.

1918 çулти Конституци йунлă граждăн вăрçин вут-хĕмĕнче çуралнă. Сталинла Конституци бођшевикла парти халăх тĕлейĕшен нумай çулсем хушши кĕрешнин аслă чаплă итогĕсене пĕтĕçтерсе тухрĕ. Анчах вăл, çав кĕрешу, пĕтмен ха. Рабочи клас диктатурин хăватне малашне те тĕреклетсе пымала, пирĕн тăшмансен нимĕнле махинацийĕсемпе фокусĕсем те совет халăхне кĕтмен çĕртен килсе ан тапăнччăр тесе, массăсене мобилизацилĕ хатĕр тытса тăрас пулать.

КИТАЙ ÇУНАЧĔСЕМ

Китай ђотчикĕсен калавĕсем

Çĕрлехи вĕçев

Вен Чиа-пин

Çĕрле, мана панă заданине пурнăçа кĕртнĕ хыççăн, епĕ хамăр базăна вĕçсе таварăнтăм. Йулашкинчен пĕри мана çав çĕрех Йапони позицийĕсем çине вĕçсе кайса бомбăсем пăрахма задани пани çинчен каларĕ. Епĕ задани çинчен тĕплĕн пĕлес тесе хамăрăн управленине чупрăм. Епĕ ун чухне савăнăçлă кăмăллăччĕ — тăшмансем çине бомбăсем кайса пăрахма мана пирвайхи хут хушрĕç. Манăн çав минутрах Шанхай тĕлĕнче пулас кăмăл çĕкленчĕ.

Манпа пĕрле Е Цзе-йун — йапонецсем çине темиçе хутчен те бомбăсем пăрахса курнă, опытлă ђотчик вĕçмеле пулнă. Епĕ пит хытă хĕпĕртерĕм. Йулашкинчен, пирĕн хуласене çĕмĕрнĕшĕн, мирлĕ халăха вĕлернĕшĕн тавăрмашкăн тÿрĕ килчĕ.

Манăн çĕрле 12 сехетре вĕçсе тухмалаччĕ. Хам пÿлĕме таварăнсассăн, вĕçев умĕн канас тесе, епĕ кроват çине выртрăм. Пĕр айăк çинчен тепри çине çаварăнса-çаварăнса выртатăп, нийепле те çывăрса кайаймастăп. Епĕ хумханатăп. Пĕлместĕп, мĕншĕн çапла пулнă вăл — те кăшт хăрăнă епĕ, те ытлашши хавхаланнă пулнă. Пуçа тĕрлĕрен шухăшсем пыра-пыра кĕреççĕ. Çитменнине тата йулташăм Ђу Цзи-син парса кĕчĕ, хамăн çемйе адрĕсне парса хăварма ыйтрĕ. Çапла ыйтни мана кăштах шухăша йачĕ — çапах та вĕт манăн хăрушă експедицийе каймала пулнă. Епĕ, темĕнле, халиччен вилĕм çинчен шухăшламан. Анчах хађ йулташа каларăм:

— Епĕ пайан çĕрле таварăнмасан пĕлтер ман арăма, вăл пачах таварăнмасть тесе пĕлтер. Кала ăна, ан хуйхăртăр вăл.

Епĕ тахçанах вĕт хамăн пурнăçăма халăх ĕçĕшĕн пама пулнă. Унтан тата епĕ çакна шухăшларăм: манăн самођот персе ансассăн, епĕ, мĕн пултарнă таран, тăшмансене пере-пере пăрахатăп, револђверти йулашки пуђăна хама вађђи хăваратăп. Манăн тыткăна лекес килмест.

Çĕрле 12 сехетре епĕр вĕçсе çĕклентĕмĕр. Тÿрех Шанхай çинелле çул тытрăмăр. Айалти хула çутисем епĕр кĕтнинчен малтанрах курăнма пуçларĕç. Пирĕн тĕлте айалта Ванпу йуханшывĕн пырĕ пулнă. Умра, малта икĕ çутă пăнча куранса кайрĕ. Ман пуçа шухăш пырса кĕчĕ: тăшман истребителĕ мар-ши вăл? Епĕ Е Цзе-йуна чавсинчен тĕртрĕм те ăна çав çутă пăнчăсем çине тĕллесе кăтартрăм. Вăл пуçне сулса илчĕ. Епĕ пулемета хатĕрлесе хутăм, анчах самођот хăйĕн çулне улăштарчĕ.

Часах епĕр Йанзепу тĕлне вĕçсе çитрĕмĕр. Пире шыраса виçĕ йе тăвата прожектăр пĕлĕте çутатма пуçларĕç. Унтан тÿпенелле перекен тупăсен батарейĕ пеме пуçларĕ. Анчах епĕр хамăр шыранă вырăна тупса та ĕлкĕртĕмĕр, вăхăта çухатмасăр, пĕтĕм бомбăсене пăрахрăмăр. Бомбăсем çурăлса сирпĕтнĕ сасăсем йанраса кайрĕç. Прожектăрсен çуттисем хĕрĕхе йахăн та пуђ çитрĕç. Тупăсем тата вăйлăрах пеме пуçларĕç. Анчах, тăшман пире шыраса тупаймарĕ — епĕр çутăсем, снарйадсем çитекен вырăнсенчен тухрăмăр.

Кайала вĕçнĕ чухне епĕ çаварăнса пăхрăм та, бомбăсем çуралнă вырăнта пушар çулăмĕ йалкăшнине куртăм. Епĕ каллех хамăн йулташа хулĕнчен туртрăм, епĕр пĕр-пĕрин çине пăхрăмăр та кулса йатăмăр.

самођочĕн хÿри патĕнчен тĕтĕм тухма пуçларĕ. Епĕр çаварăнса пăхрăмăр — вара Шен полковникăн самођотне урăх курмарăмăр. Йĕритавраши нимĕн те курăнмасть, пĕлĕтсем кăна тата айалта вĕçсĕр сарăлса выртакан шыв.

Çыран куçран çухалчĕ. Епĕр хамăр тĕллесе хунă çĕре çитсе пыратпăр. Йапонин чылай çар карапĕсем курăнма пуçларĕç. ... метр çÿлĕшĕнче вĕçсе епĕр тăшман йанинелле çул тытрăмăр. Бомбăсене пăрахрăмăр. Виççĕшне лекрĕç. Тĕтĕм тата çулăм хыпса тухни курăнчĕ. Çÿлтен курнăр, карап команди налубĕ тăрăх хĕвĕшсе чупма пуçларĕ. Ытти çар карапĕсем, бомбăсенчен хăтăлас шухăшпа, хăйсем тăнă çĕртен кайма пуçларĕç.

Пĕтĕм бомбăсене пăрахса пĕтерсен, епĕр кайала вĕçме пуçларăмăр. Епĕр çыхарса пынине курсан йапонецсен карапĕсем айккинелле хăвăрт пăрăнса тарма пуçларĕç. Бомбăсем занисене пĕтемпе пĕтерни пит шел пулнă.

Сасартăк епĕр хамăр айра самођот вĕçсе пынăнса çÿренине куртăмăр. Вăл Йапонин çар карапĕ тĕлĕнче пит айалтан вĕçсе пырать, карапĕ, çÿлтен бомбăсем пăрахасран хăрăса, тарать. Тинкерсех пăхсан, епĕр Шен полковникăн самођотне палласа илтĕмĕр. Сасартăк самођот айалалла, тÿрех çар карапĕ çине анса тăрăнмалла чăмрĕ. Хăрушла сиксе сирпĕнни сасă кĕрлесе кайрĕ, карап путма пуçларĕ, карап çинчи çынсем борт урлă шыва сикме пуçларĕç.

Епĕр паттăр вилĕмпе пĕтнĕ Шен полковнике чысласа, темиçе хут вĕçсе çаварăнтăмăр, унтан хамăр базăна вĕçсе таврăнтăмăр.

Епĕр Йапонин ултă самођотне персе антаратпăр

Фу Чи

Майăн 25-мĕшĕнче çанталăк питĕ лайăх пулнăччĕ. Пирĕн ескадрињйă каллех тăшман позицийĕсем çине бомбăсем кайса пăрахма вĕçсе тухрĕ. Епĕр, Йапони çарĕсене пулеметсенчен пеме май пултăр тесе, айалта вĕçсе пыма тăрăшатпăр.

Кайала килнĕ чухне епĕр каллех Йапонин темиçе самођотне — ултă бомбардировшчик, пилĕк истребител — тĕл пултăмăр. Унтан вĕсем патне татах пилĕк машинă пырса пĕрлешрĕç. Епĕр сывлăшри çапăçуран пăрăнса кайма шутланă пулсан, ăна тума йăвăр марччĕ. Анчах епĕр чакасшăн пулман, тăшмансен хисепĕ пиртен нумайрах пулнă пулсан та, тăшман самођочĕсене хирĕç вирхĕнтĕмĕр. Хавар çапăçу пуçланчĕ.

Йапонин малта пыракан пилĕк самођочĕ атакăларĕ пире. Епĕр сапаланса кайрăмăр, темиçе хутчен ăнăçлă маневрсем турăмăр та, йапонецсен çийĕнчи тата флангĕнчи вырăнсене пырса тухрăмăр, çавăнтах атака пуçларăмăр. Çапăçува пирĕн командир, полковник Ии йертсе пычĕ. Тăшман самођочĕсем питех хăвăрт вĕçмеççĕ тата пит начар çаварăнкалаççĕ. Çапăçура йаланах епĕр вăйлăрах пултăмăр. Пĕр минут иртсенех йапонецсен пур самођочĕсем те сийенленсе çунма пуçларĕç. Анчах тăшманăн тата тепĕр самођочĕ пырса çитрĕ. Ăна хирĕç ескадрилйă командирĕн помошникĕ Хо полковник вĕçсе кайрĕ. Çапăçу пилĕк минута пычĕ. Йапони самођочĕ йăвăр положенине лекрĕ. Анчах ăна пулăшмашкăн тепри пырса çитрĕ.

Хо полковник опытлă та йĕста ђотчик, вăл самођотсенчен пĕрне персе амантма пултарчĕ. Вăл самођот управленине çухатрĕ те ÿкрĕ. Çапăçу малалах пырать. Тăшманăн иккĕмĕш самођочĕ тÿссе тăраймарĕ, айалалла чăмса тарма хăтланса пăхрĕ. Хо полковник, бензин çитнĕ таран ăна хăваласа кайрĕ.

Кайала таварăннă чухне епĕр Китайăн икĕ самођочĕ Йапонин пилĕк „тимĕр çуначĕсемпе" çапăçма пуçланине куртăмăр. Епĕр вĕсене пулăшма пырас тенĕ çĕре, вĕсем икĕ самођотран пĕрне персе ÿкерчĕç. Бензин çитмĕ тесе шикленсе, епĕр тек çапăçмарăмăр, базăна таварăнтăмăр.

Çапла вара епĕр вăл кун Йапонин ултă самођотне персе ÿкернĕ, вĕсен ђотчикĕсене йе вĕлернĕ, йе тыткăна илнĕ. Епĕр виçĕ йулташа çухатрăмăр, вĕсем суранĕсене тÿсеймесĕр вилчĕç.

Шен полковникăн паттăр ĕçĕ

Хуан Чен-ши

Бомбăсем пăрахни çине ответлесе епĕр те бомбăсем пăрахатпăр.

Самођотсем çине кирлĕ чухлĕ бомбăсем, çунтармали тийенĕ. Епĕр вĕçсе тухма распорйажени парасса кĕтетпĕр. Йулашкинчен, пĕрре ирхине, пирĕн самођотсенчен çиччĕшĕ 3 пин метр çÿлĕшне йахăн вĕçсе çĕкленчĕç. Тайху кÿлли урлă вĕçсе иртрĕмĕр, унăн çийĕ хĕвел çутипе илемлĕн йалтăртататчĕ; унтан пĕлĕтсен çÿхе сийĕ витĕр Ванпу тата Усун йуханшывĕсене куртăмăр. Часах Нађхуей те хыçала йулчĕ. Çак вырăнта пирĕн Шен Зун-гун полковникăн — пирĕн ескадрињйă командир помошникĕн самођота темле иккек пулни палăрчĕ. Ун

Çĕнĕ тырăран авансем параççĕ

Одесшчинăри кăнтăр йенчи малта пыракан колхозсем, тырпула пухса кĕртес ĕçе тата государствăна тырă тăратассине анлăн сарса йарса, ĕçкунĕсем тăрăх авансем пама пуçланă.

Чи малтан авансем Спартовски районĕнчи „Новая жизнь" ертелти колхозниксем илнĕ. Çав ертелти чи лайăх стахановец Фишер йулташ, кăçал 335 ĕçкунĕ тунăскер, аванс шучĕпе 802 килограм тырă илнĕ, колхозник Пунгерман — 462 килограм илнĕ, вăл кăçалхи çул 308 ĕçкунĕ тунă.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Ийулĕн 4-мĕшпе 9-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни

Йулашки пилĕк кун хушшинче Анъцинрен кăнтăр-хĕвеланăçнеле Матанпа Пынцзене тытса илессишĕн калама çук хайар çапăçусем пулса пынă. Китай çарĕсем паттăрăн хирĕç тăнипе Йапони çарĕсен темиçе хутчен те кайала чакма тивнĕ. Йапони авиацийĕпе артиллерийĕ Матанпа Хукоу çине (Цзйанси провинцин çурçĕр пайĕ) темиçе кун хушши хытăн персе тăнă. Çакăнпа пĕрлех Йапони командăванийĕ çапăçусем пынă вырăна пĕрмайах çарсен пысăк подкрепленийĕсене йарса пынă. Темиçе хутчен те калама çук хытăн атакăсем тунă хыççăн йапонĕцсем ишĕлчĕк купи туса хунă Мантанпа Пынцзене тытса илнĕ.

Тăшман çарĕсем вăй тĕлĕшĕнчен малта тăнă пирки, Китай çарĕсем ийулĕн 6-мĕшĕнче Хукоуран тухса кайнă. Хукоуна тытса илнĕ хыççăн Йантцзы шывĕ тăрăх тăвала Цзўцзйан патнеле (Цзйанси провинцин Çурçĕр пайĕ) тата Ханькоу йеннеле малала кайас тĕлĕшпе Йапони флочĕ умне хăрушлăх тухса тăрат. Хукоуран хĕвел тухăçнеле тата Пынцзерен кăнтăрала йапонĕцсен тылĕнче йулнă Китай çарĕсем стратеги йенчен питех те кирлĕ пунктсене чылайĕшне хăйсен аллинче тытса тăраççĕ.

Йулашки çапăçусенче Китай авиацийĕ Йапони флочĕпе авиацине пысăк сийен кўнĕ. Ийулĕн 6-мĕшĕнче Шанхайа Йапонин пилĕк çар карапĕ çитнĕ, Китай авиацийĕ вĕсене пысăккăн сийенленĕ. Вăл карапсемпе пĕрле авианосĕц та пур, ун çинче китайĕцсем çĕмĕрсе йурăхсăра кăларнă самолъотсем пурĕ 30 пулнă.

Çурçĕр Китайра Йапони командăванийĕ Шаньси провинцине халь те çар чаçĕсем илсе пырат-ха. Кунта Йапони çарĕсем пысăк çапăçусене хатĕрленеççĕ, вĕсем Хуанхе шывĕ урлă каçма шутлаççĕ. Шаньси правинцинче йулашки вăхăтра Йапони çарĕсен хисепĕ 40 пин салтака çитнĕ. Китай çарĕсем, Йапонин çĕнĕ подкрепленийĕсем пынине пăхмасăрах, йапонĕцсене туймалах çапаççĕ. Ийулĕн 4-мĕшĕнче Китай çарĕсем Шаньси провинцин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче йапонĕцсене Аньипе Йуньченрен хĕссе кăларнă. Йулашки кунсенче пысăк çапăçусем Цисйан çывăхĕнче Таййуаньрен кăнтăр йеннеле пынă.

Кăнтăр Китайра Йапони авиацийĕ Гуандун провинцин çыранĕсем çине пĕрмайах бомбăсем пăрахат. Сватоу çывăхĕнче Йапонин 26 çар карапĕ тăрат.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Левант фронтĕнчи Суерос районĕнче (Ондран хĕвеланăç йеннелле) пăлхавçăсемпе интервентсен пысăк вăйĕсем республиканĕцсен позицийĕсем çине ийулĕн 7-мĕшĕнче кунĕпех атакă туса тăнă. Атакăсене çĕмĕрсе тăкнă, фашиссене йăвăр çухатусем тутарнă. Çав районрах республикă çарĕсен чаçĕсем пăлхавçăсен Вео йалĕ патĕнчи позицийĕсем çине кĕтмен çĕртен атакă туса, фашиссен пĕр танкне çĕмĕрсе тăкнă. Вильйавиеха районĕнче (Нулесран çурçĕр йеннеле) хайар çапăçу пырат.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

* * *

Испанин оборонă министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ийунь уйăхĕнче республиканĕцсем фашиссен 42 самолъотне персе антарнă, вăл шутран вуниккĕшĕ пысăк бомбардировщиксем. Республикă авиацин ийун уйăхĕнче 18 самолъот пĕтнĕ.

(ТАСС).

Испани Мароккинчи пăлханусемпе демонстрацисем

Фашиссем туртса илнĕ Испани Мароккинчен килекен хыпарсем тăрăх, Мароккăри ăрусен хушшинчи пăлханусем сарăлнăçем сарăлса пыраççĕ. Сĕршывра час-часах кĕтмен-çĕртен демонстрацисем пулса иртеççĕ. Ку вăл—Франко генерал çарĕсенче вилсе пĕтнĕ марокканĕц-салтаксен тăлăха йулнă арăмĕсемпе ачисем тăвакан демонстрацисем. Испанирен тăван сĕршыва аманса, суранланса таврăнакансем çине пăхнипех, çавăн пекех тата фронтсенче пăлхавçăсем, Италипе Германи интервенчĕсем туртса илнĕ провинцисенче мĕн пулса иртни синчен каласа панисем Мароккăри халăха тата ытларах тарăхтарат, силлентерет. Мароккăри фашисла влаçсем йалсенче пулакан демонстрацисене винтовкăсемпе револьверсемпе пере-пере салатса йараççĕ. —

(ТАСС).

Йетĕрне хулине Сăр шывĕ урлă каçма кăçал плашкоутлă кĕпер тунă. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Плашкоутлă кĕпер.

Иванов фото-ўкерчĕкĕ.

СОВЕТ СОЙУЗĔ ТĂРĂХ

●● Ийулĕн 25-мĕшĕнче Минск хулинче Белоруççи ССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççийĕ пухăнат.

●● Ийулĕн 13-мĕшĕнче Сталинабадра Таджик ССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççийĕ пухăнат.

●● Украинă СС Республикĕн ăслăхсен Академийĕн библиотеки РСДРП иккĕмĕш сйесĕ пулнăранпа 35 çул тултарнă йатпа выстăвкă организацилет. Йагарласа тунă пайăра Ленинпа Сталин йулташсен, большевикла партин организатăрĕсен ĕçĕсене, сйеса хатĕрленнĕ çĕрте ленинла „Искра" хаçатăн ĕçне чаплăн кăтартакан документсем пухнă.

●● Августăн 6-мĕшĕнче Коктебелте, Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕ 20 çул тултарнă йатпа, авиамоделиссен пĕтĕм сойузри ăмăртăвĕ пуçланат. Унта Совет Сойузĕнчи хуласенчен, облăçсемпе республикăсенчен авиамоделиссен чи лайăх сборнăй командисем пурĕ 11 пулаççĕ.

●● Запорожскри „Коммунар" савăт çĕнĕ конструкцилĕ виçĕ комбайн туса кăларнă. Вĕсенчен иккĕше—сарлакан илсе выраканскерсем, ротарлă йышшисем. Виççĕмĕш комбайнĕн улăм парахаканĕ ытти комбайнсен пек мар—платформăла тунă. Ĕçре сăнаса пăхма комбайнсене Çурçĕр Кавказри уйхирсене ĕçлеме йанă.

●● Ийулĕн 10-мĕшĕнче Мускавра РСФСР тăрăх пăшалтан чи лайăх тĕл перекенсене палăртас шутпа ăмăртусем пуçланаççĕ. Вĕсенчен икĕ командă тăваççĕ, çав командăсем ССР Сойузĕнчи халăхсен августăн 20-мĕшĕнчен пуçланакан спартакиадинче пулаççĕ. Ăмăртăва Российă федерацийĕнчи облăçсенчен, крайсемпе республикăсенчен пăшалтан лайăх тĕл перекенсем 150 çын пыраççĕ.

(ТАСС).

Сойузри уйхирсенче

Вăтам Атăл тăрăхĕнче тырă вырма тухаççĕ

Куйбышĕв облăçĕнче шăрăх çанталăк тăрат. Тырăсем хăвăрттăн пулаççĕ. Ново-Девиченски, Николайĕвски тата ытти районсенчи колхозсем ыраш вырма пуçланă та ĕнтĕ. Кĕрхи тулă пĕрчисем те пулса пыраççĕ.

Оренбург облăçĕнчи колхозсем те тырă вырма тухаççĕ. Кăçалхи çул кунта ыраш иртнĕ çулхинчен темиçе кун малтан пулса çитет.

Хирсенче комбайнерсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Нижневйазовски МТС-ĕнчи стаханăвĕц-комбайнер Блохин иккĕ „Сталинĕцпа" кунсеренех 100-шер гектар пухма пулнă.

Малта пыракан колхоз

Сталин йачĕпе тăракан колхоз (Усть-Лабински станици, Краснодар крайĕ) тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе районта чи малти вырăна тухнă. Колхозниксем пучахлă тырăсене çуррине ытла вырнă та ĕнтĕ. Урпа вырса пĕтернĕ. Колхоз чи малтан çапнă тырра государствăна парат. Государствăна урпа парас плана тултарнă.

Уйхирсенчи массăлă ĕç

Лозоватки йалĕнчи (Днепропетровшчинă) парти организацийĕ уйхирте массăлă-политикăлă ĕçе пысăккăн туса пырат. Суйлав кампанинче ĕçленĕ 128 агитатăра пурне те колхозсенчи бригадăсене йанă. Уйхирсенче культурă табăрĕсем тунă, кўçса çўрекен библиотекăсем организациленĕ. Çтена хаçачĕсем кашни кунах тухса тăраççĕ.

(ТАСС).

Коккинакипе Брйандинский йулташсем Комсомольск хулине вĕçсе пынă

Ийулĕн 8-мĕшĕнче хăйулă та паттăр лътчиксем Коккинакипе Брйандинский йулташсем Хабарăвскран Комсомольск хулине вĕçсе пынă. Унта кайма вĕçсе тухас умĕн вĕсем çапла каласа хăварнă:

— Инçет-Хĕвелтухăçне килсен çĕнĕрен тăвакан тĕлĕнмеле чаплă хуласене курса каймасăр тўсме çук. Çавăнпа та ĕнтĕ епĕр кунта вĕçсе килме шут тытрăмăр. Çамрăксен хулинчен—Комсомольскран—епĕр каллех Хабарăвска таврăнатпăр та, унтан вара Мускава тухса кайатпăр,—тенĕ.

(ТАСС).

„Волочаевские дни" кинона йалта кăтартрĕç

ВĂРМАР. Ийулĕн 2-мĕшĕнче Шăплат йалĕнче „Волочаевские дни" йатлă саслă фильм кăтартрĕç. Кино курма халăх пит нумай пухăннă. Колхозниксем картинăна мухтаççĕ:—Ку фильм совет халăхĕ Йапони интервенчĕсене пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчен хăваласа кăларса йанине кăтартат, хамăрăн социалисăмлă тăван çĕршыва тата ытларах йуратма вĕрентет, теççĕ вĕсем.

А. СТЕПАНАВ.

Пансен Польшинчи йăласем

Польшă правителствин пуçлăхĕ Складковский „Польшăри хуласенчи, местечкăсенчи тата йалсенчи пылчăка хирĕç, чыссăрлăха хирĕç вăрçă пуçлама" шут тытнă. Ийунĕн 25-мĕшĕнче вырăнсенчи влаçсем Складковский приказне илнĕ. Вăл приказра: пур хўме-картасене те сăрлама та шуратма, çатансем вырăнне хăма картасем туса лартма, илемсĕр кивĕ çуртсене çĕмĕрсе тăкма, картишсене чул сарса тухма, пўртсене шуратма, çынсене çăвăнса тасалма т. ыт. те тума хушнă.

Приказа пурнăça кĕртмели срук—виçĕ кунтан пуçласа 14 куна çитиччен.

Польшăра çак приказ хыççăн сарăлсă кайнă ĕççем вĕсем, чăнинех те халăх иккекĕ пулса тăнă.

Штрафсемпе ăрĕссем тăкăнма пуçланă. Çынсене çемйи-çемйипе, пĕчĕк ачине йе ваттисене пăхса тăмасăр, урама кăлара-кăлара ывăтаççĕ.

Пĕр буржуалă хаçат çакăн пек фактсем илсе кăтартат. Мехов хулинче влаçсем 22 пўрт кўçарма йышăннă, вĕсем хулана вăраласа параççĕ, тенĕ вĕсем. Хальхи вăхăтра 14 пўртне куçарнă. 25 çемйе пĕчĕк ачисемпе пĕрле уçă пĕлĕт айĕнчех пурăнаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем валъли хулара хваттер çук. Прошовицы хулинче 20 пўрт куçарнă. Çемйисене урама кăларса ывăтнă.

Поморйере пĕр сахал çĕрлĕ хресчен Слибода çакăнса вилнĕ, мĕншĕн тесен, ампара йўсама тата шуратма панă приказа пурнăça кĕртме унăн вăй çитмен. Тырă вырма хатĕрленекен чухăнсем çеç мар, вырăнти администраци те нимĕн тума пĕлмест, аптăраса ўкнĕ. Çапла, Старостинскри судра килçурта чыссăр тытнăшăн айăпланакансен ĕçне пăхса тухнă. Сасартăк тахăшĕ: „генерал Складковский килчĕ!" тесе кăшкăрса йанă. Зал пĕр самант хушшинчех пушанса йулнă. Пурте тарса пĕтнĕ—айăпланаканнисем те, судйисем те. Çакнашкал фактсене, йе тата халăха ирĕксĕрлесе мунча кĕртни пек фактсене вуншарăн та илсе кăтартма пулĕччĕ.

(ТАСС).

Савăта йалан лайăх ĕçлекен тумала

Пилĕк ултă уйăх кайала Канашри вакунсем йусакан савăтăн пур участкисенче те сăтăрçăсем туса хунă ответсăрлăх, культурсăрлăх сарăлнине, çирĕп йĕрке пулманнине курма пулнă. Çавнашкал йĕркесĕрлĕхсем пулнă пирки савăт чылай вăхăт хушши хăйĕн производствă планне ăнăçлăн тултарса пырайман.

Сăтăрçăсене çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, йертсе пырас ĕçе лартнă çĕнĕ çынсем ирсĕрлĕхсене, çитменлĕхсене васкасах пĕтерессишĕн çине тăрса ĕçлеме тытăнчĕç. Ку ĕçе вĕсем хăйсем пĕччен мар, парти организацийĕ йертсе пынипе, рабочисен тата инженерлă-техникла работниксен анлă массипе таччăн çыхăнса ĕçленипе пурнăçа кĕртсе пынă. Вĕсем стаханăвла йухăма анлăн сарса, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани вăхăтĕнче плана тултарас тĕлĕшпе палла ўсĕмсем турĕç. Тимĕрç, йăвăç каскалакан тата механически цехсем ийунь планне суйлав кунĕ тĕлне ытлашшипех тултарчĕç. Ку вăл савăт коллективне малашне татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ, „плана тултарма йăвăр" текен çĕрĕк шухăша тĕпĕ йерепех çĕмĕрсе тăкрĕ.

Ийунь уйăхне савăт малтанхи уйăхсенчен лайăхрах ĕçленипе вĕç ерĕ. Ийунь уйăх планне тимĕрç цехĕ—139,3 процент, механически цех—107,4 процент, рессорсемпе пружинăсем туса кăларакан цех—100 процент тата йăвăç каскалакан цех — 114,6 процент тултарчĕç. Урапасем тăвакан тата вакунсен пайĕсене йухакан цехсем йăна плана тултараймарĕç.

Продукци пахалăхне лайăхлатас тата браксене чакарас тĕлĕшпе те ўсĕмсем пур. Кашни рабочи пысăк пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн тăрăшни ўççăнах курăнат. Организацилĕ, пысăк тухăçлăхпа ĕçлес йăла савăтра çирĕпленсех пырат.

Савăт ўсĕм çулĕ çинче. Халĕ ĕнтĕ савăта йалан лайăх ĕçлекен предприйати тумала. Çавна тума ўсĕмсемпе лăпланса лармасăр, большевикла тимлĕхпе ĕçлени кирлĕ.

Анчах хальхи вăхăтра ĕç пур участкăсенче те ăнăçлăн пырат теме çук-ха. Уйрăмăнах савăтра стаханăвла йухăм вăрахăн сарăлса пырат. Социалисăмлă ăмăрту хут çинче çеç. Цехпа цех, бригадăпа бригадă хушшинче тунă ăмăрту догăвăрĕсене тĕрĕслемеççĕ. Профсойуз организацийĕ ку тĕлĕшпе ĕçе йертсе пырас вырăнне, стаханăвĕцсен хисепне катартакан сводкă илнисĕр пуçне урăх нимех те тумаст. Производствăлă канашлусем йĕркелĕ, катартнă срукра пулса пымаççĕ. Дисциплинăна çирĕплетессишĕн тивĕçлипе кĕрешни çук. Май уйăхĕнче пĕтĕмпе 857 кун прогул пулнă пулсан, ку цифăр ийунь уйăхĕнче те чакман.

Ĕç вырăнĕсене тĕрĕс организацилесси, уйрăм стаханăвĕцсен, лайăх ĕçлекен бригадăсен, цехсен опычĕсене сарасси вăрахăн пырат.

Кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерсен савăт чылайах лайăх ĕçлеме пуçламала. Куна тума савăтра пур условисем те пур, кадрсем çителĕклĕ.

Йертсе пырас ĕçе лартнă çĕнĕ çынсене, стаханăвĕцсене йалан пулăшса пыни, массăна организацилеме пĕлни çеç кирлĕ. Ку ĕçре уйрăмăнах парти организацин çирĕп йертсе пымала.

В. Ластăчкин.

Н. И. Шелепи

УТ-ÇИ

Ак ĕнтĕ улăх,
Ак илем пахчи—
Чаплă çаранлăх,—
Савăнат мучи.
Шăршă та лайăх,
Сывлăш та уçă,
Лăс пек туйралăх—
Çырла çимĕçĕ.
Хурт уйăрнă пек
Халăхĕ вĕрет,
Урлă та пирлĕ
Чупса çеç çўрет.
Чăштăр та чаштăр
Кайакĕ вĕçет,
Ылттăн сарă хурт
Тутлă пыл çĕклет.
Уйав хĕрсем пек
Карти картипе
Пĕтĕм улăха
Çын карталаннă.
Харăс çĕкленсе
Йĕрки йĕркипе
Колхоз çемйисем
Утă çулаççĕ.
Çава, машинсен
Паттăр сассисем
Йан-йан йанăрат,
Йурласа тăрат.
Курăк тĕпĕнчен
Сĕлен пынă пек
Çари шăхăрса
Чашлатса пырат.
Ак ĕнтĕ утă
Çулса пĕтерчĕç,
Касси-кассипе
Паккус ўкерчĕç.
Çава пăрахса
Кĕрепле тытрĕçĕ,
Утă пухмашкăн
Тухса утрĕçĕ.
Каллех улăха
Халăх саланчĕ,
Пурте паккуса
Тĕрткеленеççĕ.
Хăшĕ пухаççĕ,
Хăшĕ тавраççĕ,
Хăшĕ сенĕкпе
Чиксе çавăраççĕ,—
Паттăр Хĕрлĕ çар
Вăйин йеверлĕ
Пĕтĕм улăхра
Халăх чупкалат.
Шăкăл та шăкăл
Калаçса кулса
Колхоз васкаса
Утă пуçтарат.
Улăх туллийех
Выльăх кĕтў пек
Валемпе купа
Курăнса ларат.
Хăшĕ вĕренпе,
Хăшĕ çапăпа
Капан хывмашкăн
Утă турттарат.
Капан варринчи
Вăрăм шертийĕ
Пăшал сăнни пек
Курăнса тăрат.
Стаханăвĕцсем
Сенĕкĕсене
Валем пысăккĕш
Чиксе йăтаççĕ.
Арăмсем çўлте,
Капан çийĕнче
Рак хаччийĕ пек
Йарса тытаççĕ.
Шўреке тăрлă
Утă капансем
Улăх туллийех
Шатса тухаççĕ.
Пирĕн колхозсем—
Уй-хир хуçисем
Çаран утине
Çапла пухаççĕ.

„Ленин çулĕпе" çтена хаçачĕ вăйлă тырпулшăн кĕрешўре

Исампайри „Смычка" колхоз (Йетĕрне р.) иртнĕ 1937 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Вăйлă тырпул туса илни колхоза Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх Выстăвкинче пулма тивĕç пачĕ. Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх Выстăвкин „Тĕштырă" тата зонăлă павилйонĕсенче пулма кĕртнĕ кандидатсен 1 мĕш номĕрлĕ списки çине „Смычка" колхоза 3,1 гектар çĕр çинчен (кашни гектартан) 19,3 центнĕр урпа туса илнĕшĕн кĕртнĕ. Паллах, кунта агротехникăна пурнăçласа пыни пулăшнă.

Агротехникă ĕçĕсене пурнăçлас ĕçре колхозра тухса тăракан „Ленин çулĕпе" çтена хаçачĕ те тăрăшса ĕçленĕ. Хаçатăн 1937 çулта тухнă номĕрĕсенче кашниннех агротехникă кĕтесси пур. Унта колхоз агротехникăна мĕнле пурнăçласа пыни çинчен çырса тăчĕ. Çавăнла пĕрлех вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçри стаханăвĕцсен, ударниксен ĕçĕсене хаçатра çутатса пычĕ. Колхозниксем хушшинче социалисăмлă ăмăртăва, стаханăвла йухăма анлăн сарса пыма пулăшрĕ.

Çтена хаçачĕ колхозри çитменлĕхсене, ĕçри йалавсене хытă критиклерĕ. Вĕсем çинчен хаçатра заметкă тухнă хыççăн, правленипе ларăвĕнче йе колхозниксен пухă вĕсенче сўтсе-йавнă. Çакăн хыççăн ĕç çине çийелтен пăхнă колхозниксем лайăх ĕçлеме тытăннă.

„Ленин çулĕпе" çтена хаçатне çырса тăракансен хисепĕ 18 çынна çитрĕ. Вĕсем пурте ударниксемпе стаханăвĕцсем. Çмелов Гаврил—колхозри вăтă стаханăвĕц, стаханăвла ĕçленĕшĕн ăна кашни çулах премисем панă. Гаврилăвă Анастасийă, Алексейĕв Иван, Филиппăв Петр—кусем пурте „Ленин çулĕпе" çтена хаçачĕн активлă йалкорĕсем, иртнĕ çултанпах çтена хаçат ĕçĕнче активлă хутшăнса ĕçлеççĕ.

Çтена хаçат редакторĕ Андрей Васийлĕв йулташ вĕсемпе йалан калаçусем туса иртерет, малашне мĕнле çырса тăмалли çинчен калаçса парат. Çтена хаçачĕн редколлегин ĕç планне йалкорсемпе пĕрле сўтсе йаваççĕ.

Кăçал 8 номĕр тухнă. Хаçат колхозниксем хушшинче пысăк авторитетпа усă курат. Çавна май хаçатра тухнă материалсем пĕрре те усăсăр-сăйа каймаççĕ.

Ник. Цветков.

Хитре çăмахсем тата хула совечĕн ĕçĕсем

Шупашкарти Йарославски, Плеханăв, Володарски урамĕсенче кĕркунне-çуркунне машинпа пырса кĕме çук. Çурран çўрекенсем чĕркуççи таран пылчăк çинче лачăртатнисем, калушсене пылчăк çине лартса хăварнисем темĕн чухлĕ пулнă. Çакăншăн хула советне ыра мар сăмахсем каланисем те пайтах пулнă. Çавăнпа хула совечĕ кăçал çак урамсене чул йе торцовкă сарма хатĕрленнине хула ĕçсыннисем питĕ хапăл туса йышăнчĕç.

— Ну, пылчăкран хăтăлатпăр ĕнтĕ,—терĕç çак урамсенче пурăнакан граждăнсем. Карл Маркс урамне чукунçул станци патне çитиччен асфальт сармала тени хулари çынсене питĕ хавăслантарчĕ.

— Акă ĕнтĕ, пыр та пăх, те Мускав урамĕ, те Шупашкар урамĕ, паллаймăн,—тесе калаçаччĕç ун чухне.

Вăхăт малала шăват. Май уйăхĕн вĕçĕнче Карл Маркс урамĕ тăрăх çўреме чарчĕç. Асфальт сарма хатĕрленеççĕ. Халиччен чул сарнă урама пăсса тăкрĕç. Асфальт сарма йурăхлă çул тăваççĕ. Анчах чукунçул станци тĕлне çитиччен мар, пединститут тĕлне çитиччен çеç асфальт сараççĕ.. Мĕншĕн тесен, станцине çитиччен асфальт саратпăр тесе пĕр пысăк çын мухтанса, хула совечĕн планĕпе паллашмасăрах калана. Пединститут тĕлне çитиччен сарни те питĕ пысăк ĕç. Вăхăт малалах шăват, анчах.. хула совечĕ кайала чакат. Карл Маркс урамне банк тĕлне çитиччен çеç асфальт сарма çĕнĕ план тăват. План хыççăн план.. йулашкинчен ĕç пачах чарăнса ларат. Халĕ Карл Маркс урамĕнче пĕр çын та ĕçлемест. Тротуарсем çине чул пăрахса тухнă, утса çўреме çук, варрипе—машинсем йара параççĕ. Асфальт сарма хатĕрленĕ çул каллех путăк-шăтăклă пулса тăрат. Хăçан асфальт сарма тытăнассине хула çыннисем мар, хула советĕнче ĕçлекенсем те пĕлмеççĕ. „Тытăнасса тытăнтăмăр, материалсем çук, пулат-и, пулмаст-и, калама хĕн", теççĕ хула советĕнчисем. Хула совечĕ çапла чакса пычĕ: чукунçул станци— пединститут— банк.. унтан тĕлли-палли те çук. Çул анатала,—чакса пыма йăвăр мар пулаç.

Володарски урамĕнче пĕр çын пĕр-ик кун хушши йалхуçалăх институчĕ тĕлĕнче çынсене такăнтарса ўкерекен тĕмескесене йакаткаларĕ. Унтан вара çав урама кĕреçе пырса тĕкĕнмерĕ. Пĕр катăк чул, пĕр татăк урăх стройматериалсем кўрсе килмерĕç. Хĕлле турттарса хатĕрленĕ хăйăр çилпе вĕçсе выртнисĕр пуçне урăх нимĕн те çук.

Йарославски урамĕнче хăйăр пур. Хĕлле хатĕрленĕ план пур. Анчах... нимĕнле ĕç те çук.

Плеханăв урамĕнче те хăйăр вĕççе выртат. Çул йусанине, алла кĕреçе тытса ĕçлекен çынна, чул йе торцовкă сарнине никам та кураймĕ. Хула совечĕ ку урама та йусама план тунă.

Хула совечĕ хăйĕн планĕнче пăхнисĕр пуçне Заводскайа урамне торцовкă сарма тытăнчĕ. Темшĕн ни лашапа, ни сурран каçма май çук лупам тĕлне çитесси 7—8 метр йулсан, ĕç пĕтрĕ тесе шутларĕç те, сарма пăрахрĕç.

Çапла пыраççĕ ĕçсем Шупашкар хулинче, хĕрўлĕ сăмахсем каланă, плансем тунă хыççăн.

Хулари ĕç халăхĕ хула совечĕ плансене пурнăçа кĕртессе кĕтет.

Панă сăмахран, йышăннă планран кайала чакни калама çук килĕшўсĕр.

Р. ШАШКОВ.

Колхозăн икĕ автомобил

ÇЕМЕРЛЕ. Турханти „Комбинат" колхоз кăçал государствăна сĕт-çу сутса татах тепĕр грузовик туйанчĕ. Хальхи вăхăтра „Комбинат" колхозăн икĕ автомобил пур.

П. ЙАКАВЛЕВ.

Мускав футболисĕсем Шупашкарта

Ийулĕн 8-мĕшĕнче Мускаври „Родина" спорт общĕствин футбол команди Шупашкара килчĕ.

Пайан ийулĕн 10-мĕшĕнче, „Темп" общĕствин стадионĕнче „Родина" тата Шупашкарти „Спартак" общĕствин пĕрремĕш футбол командисем тĕл пулса выльаççĕ. „Спартак" командин составĕ: Дмитрийĕв (вратарь), Илйин. Титов (защитă), Йенчикăв, Афанаçйĕв, Иванов (полузащитă), Хрисанфăв, Бурцĕв, Йурганăв, Плаксин (нападени).

„Родина" общĕствă командин вратарĕ—Давыдăв, защитă—Охошкин, Курнаков, полузащитă—Калканăв, Çергейĕв, Иванов, нападени — Орловский, Горженин, Борискин, Куçмин, Свирин.

Ку командă футбол вăййипе Мускав хулинче малти вырăна тухассишĕн пынă ăмăртура 7-мĕш вырăна йышăннă, „Торпедо" командинчен те мала тухнă.

Ийулĕн 10-мĕшĕнчи футбол вăййинче судйа Мускаври судйесен коллеги членĕ Ханейĕв йулташ пулат.

Ийулĕн 12-мĕшĕнче „Родина" командипе Шупашкар хулинчи сборнăй командă выльаççĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ

ЧĂВАШВĂРМАН ТРЕСТНЕ

районсенче ĕçлеме:

1. Инженер-строителсем,
2. Çулйĕрпе тата ытти стройтелствăсенче ĕçлеме деçатниксем,
3. Аслă финансистсем,
4. Аслă бухгалтерсем, бухгалтер-ревизорсем тата бухгалтерсем,
5. Кадрсене техникă йенĕпе вĕрентекен методистсем,
6. Вăрман хатĕрлев механизаци йенĕпе преподавателсем,
7. Плановиксем,
8. Техниксемпе нормировщиксем

КИРЛĔ

Условисем килĕшў тăрăх. Хваттер параççĕ. Ĕçе кĕрес текенсен çак адрĕспе пымала:

г. Чебоксары, ул. Урицкого, 36, Чувашлеспром, отдел кадров.

Тел. № 333, 146.

3—1

Чăвашсен Педагогикă Институтне

машинисткă кирлĕ

Ĕçукĕ государствăн нормировкипе тăрăх.

ДИРЕКЦИ.

2—1

Уполномоченный Чувашглавлита №340 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, заказ № 881.